Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЮНЬ 11 ШАМАТКУН
132 (4945) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Вăрман хатĕрлевĕ—ответлă ĕç

Çулран çул промышленнăç, коммуналлă хуçалăх, культура строительстви ÿссе пырать. Чăваш республикĕнче хăйĕнче кăна çак 1938 çул хушшинче капитальнăй строительствă ĕçне 73 мĕлйун тенкĕ ытларах хывмала. Çĕнĕ стройкăсем валли тĕмĕн чухле стройматериалсем кирлĕ пулать. Пуринчен те пуллă, стройматериалсем хушшинче уйрăмах—йывăç пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çав вăхăтрах, çак чи ответлă участкăра епĕр йăвăрлăхсем тÿсетпĕр. Çĕнĕ стройкăсене йывăç кирлĕ, вăрман промышленнăçĕ хăйĕн планне тултараймасть.

Тăшмансем пире çакăнта сахал мар сиен туса хăварчĕç. Чăвашвăрманпром руководителĕсем тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе ытла та вăйсăр кĕрешеççĕ.

Тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисем, пимрен ытла вăрман промышленнăç хăйĕн планне кварталран квартала тултарса пыманнинчен лайăх курăнать. Каçалхи пĕрремĕш квартал планне тултарман. Иккĕмĕш квартал планне тултарасси те питĕ йапăх пырать. План тăрăх иккĕмĕш кварталта 108 пин кубла метр вăрман хатĕрлемеле пулнă пулсан, апрел, май тата ийунĕн малтанхи пилĕк кунĕнче пурĕ те 29.158 кубла метр çеç хатĕрленĕ (26,9 проц.).

Хатĕрленĕ вăрмана турттарса кăларасси тата та начартарах пырать. Иккĕмĕш кварталăн малтанхи икĕ уйăх хушшинче лашасемпе 126 пин кубла метр кăларас вырăнне 27.229 кубла метр çеç кăларнă. Механизациленĕ çулсемпе кунтан та кайарах кăларнă (18,5 проц.).

Йулашки кунсенче вăрман кăларас ĕçри хăвартлăхсем тата та ытларах чакнă. Майăн йулашки пилĕккунĕнче лашасемпе 5.431 кубла метр кăларнă пулсан, ийунĕн малтанхи пилĕк кунĕнче 4.040 кубла метр çеç кăларнă. Механизациленĕ çулсемпе кăларасси тата ытларах чакнă.

Иккĕмĕш квартал пĕтесси тата 20 кун çеç йулчĕ. Пайанхи хăвăртлăхсемпе ĕçлесен епĕр тата пысăкрах хăрушлăхсем умне пырса тăма пултаратпăр.

Вăрман хатĕрлевне вырăнтан тапратса йамали тĕп услови вăл—тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене вăрман çистеминче татăклăн пĕтерме тытăнасси, вăрманта йалан ĕçлекен рабочисен кадрне тăвасси, вĕсене валли кирлĕ условисене пĕтĕмпех туса парасси, вăрманта социалисăмла ĕç меслечĕсене анлăн сарса йарасси, механисăмсемпе туллин усă курмала тăвасси пулать.

Чăн малтан, тăшмансем вăрманта çуна çулĕпе анчах ĕçлемеле тунă йĕркене пĕтерес пулать. Вăрманта çулталăкĕпе ĕçлемеле тăвас пулать. Çавăн пек ĕçлемеле тăвассине хирĕç тăракансене хайаррăн çĕмĕрсе тăкмала.

Партипе правительствă вăрманта ĕçлекен рабочисене кирлĕ условисене пурне те туса пачĕç. Вăрманта договăр тăрăх пĕр çулталăкран кайа мар ĕçлекен колхозниксен хуçалăхĕсене йалхуçалăх налогĕ тÿлессинчен, государствăна сĕт тăрантассинчен хăтарнă. Вăрманта ĕçлекен колхозниксем, колхозра тырпулсене валеçнĕ чухне, колхозран государствă хакĕпе тыра тата выльăх апачĕ колхозра лайăх ĕçлекен ытти колхозниксемпе тан илме пултараççĕ. Вăрманта ĕçлекен колхозниксен килйышĕнчи çынсене колхоз правленисем колхозра ĕç ыттисенчен маларах хурса памала. Çавăн пекех, вĕсен килвырăнĕ çуменчи пахча ĕçĕсене тума, йалхуçалăх ертелĕн уставĕ тăрăх, кирлĕ таран инвентарсем тата ытти ĕçсене тума лашасем памала.

Колхоз правленисен вăрманта ĕçлес текен колхозниксене вăрман организацисемпе нумай вăхăта договăр тума пур йенчен те пулăшмала. Вăрман организацисен колхоз правленисемпе пĕр-пĕрне социалисăмла пулăшу пама договăрсем тумала. Вăл договăрсенче икĕ йенчен те конкретлă обйазательствăсем пулмала: колхоз правленисем—колхозниксене вăрман ĕçне йарас йенĕпе, вăрман организацисен—колхоза материаллă пулăшу (вăрман, çаран т. ыт.) парас йенĕпе. Колхозниксене вăрман ĕçне йарассине хирĕç тăракан, çавăн пекех колхозниксене вăрмантан договăрта кăтартнă срук иртиччен чĕнсе илекен колхоз председателĕсене судпа айăплама пултараççĕ.

Çаксем çинчен пурин çинчен те колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса парас пулать. Çакăн хыççăн колхозниксем вăрман ĕçне йышлăн тухасси курăнсах тăрать. Анчах çак ĕçе организацилени, парти райкомĕсемпе райĕçтăвкомсем йенчен йертсе пыни кирлĕ.

Вăрман хатĕрлевне ĕç вăйĕ парасси кашни колхозшăн хисеплĕ ĕç пулмала. Вăрман ĕçне кайас текен колхозниксене колхозра нимĕнле сăлтавпа та чарса тăмала мар. Вăрман хатĕрлевне прорывран кăларасси пĕтĕм республикĕн ĕçĕ пулса тăмала.

Елĕк, Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай районĕсенчи комсомол организацисем, Мускав облăçĕнчи комсомолецсенчен пример илсе, вăрман организацисене пулăшма пуçларĕç. Çак районсенчен 150 комсомолец вăрманта ĕçлеççĕ. Çĕмĕрле районĕнчи комсомолецсем кашнийĕх тата пилĕкшер çын вăрман ĕçне хутшăнтарма пулчĕç. Çĕмĕрле районĕнчи комсомолецсен пуçарăвне пĕтĕм комсомол организацисен йышăнмала.

Вăрманпромхозсемпе вăрман хуçалăх руководителĕсен вăрмана пыракан рабочисене лайăх кĕтсе илмеле, вĕсене валли культурăпа йăла тĕлĕшĕнчен кирлĕ условисем туса памала. Вăрманта ĕçлекенсене ĕç укçи вăхăтра памала.

Механизациленĕ çулсемпе, автопарксемпе, трактăрсемпе туллин усă курмала. Кашни çул, кашни автомашинă, трактăр график тăрăх сехет пек тĕрĕс ĕçлемеле, кулленхи ĕç нормине ытлашшипех тултарса пымала. Шоферсем, трактăриссем хушшинче чăн чăн социалисăмлă ăмăрту пуçарса йамала. Профсойуз организацисен социалисăмлă ăмăрту договăрĕсене тăтăшах тĕрĕслесе тăмала.

Вăрман хатĕрлевĕнче стаханăвла ĕç меслечĕ тĕп вырăн йышăнмала. Вăрманта ĕçлекенсене пурне те социалисăмла ăмăртăва хутшăнтармала, стаханăвĕцсен ĕç меслечĕ пĕтĕм вăрман рабочисен тивĕçĕ пулса тăмала.

Çитес кунсенчех вăрман хатĕрлевĕнче татăклă улшăнусем тумала. Çак кунсенчех парти райкомĕсен тата райĕçтăвкомсен договăр тунă колхозсем, колхозниксем вăрман хатĕрлевне массăлă тухса, хăйсем илнĕ обйазательствăсене пурнăçа кĕртессине организацилемеле. Иккĕмĕш квартал планне мĕнле пулсан та ийунĕн 26-мĕшне тултармала. Çакăн пек тума пирĕн пур условисем те пур. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленни, асла Сталин Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма килĕшÿ пани—халăхăн производствăлă хастарлăхне нихăçанхинчен те ытла çĕклентерчĕ. Халăх масси çĕкленĕвĕн пуçне тăрса, хамăрăн çĕнĕ стройкăсем ыйтнине пурне те туса памала тăвар!

Сталински суйлав округĕнче

Столицăри Сталински суйлав округĕнче доверĕннăйсем, участкăсенчи комиççисен членĕсем тата агитатăрсем кашни кунах суйлавçăсемпе тĕл пулаççĕ. Каласусенче тата суйлавçăсен спискисене тĕрĕслесе пăхнă вăхăтра çакă палăрнă: ĕççынннисенчен хăшпĕрисем РСФСР Верховнăй Советне суйланă кун—ийунĕн 26-мĕшĕнче—Мускавра пулаймаççĕ: хăшпĕрисем санаторисене кайаççĕ, чылайĕшĕсем дачăсенче пурăнаççĕ тата ыт. те.

Агитатăрсем суйлавçăсене Мускавран тухса кайас мĕн пулсан, вĕсем суйлав кунĕнче ăçта пулнă, çавăнта сасăласси çинчен ăнлантарса параççĕ.

Суйлавçăсене „сасăлама права паракан удостоверени“ мĕнле йĕркепе илесси çинчен ăнлантарса параççĕ, вĕсене ăçта илмелине тата мĕн вăхăтра илмелине каласа параççĕ.

Сталински райсоветĕнче „сасăлама права паракан удостоверенисене“ парасси майăн 26-мĕшĕнче пуçланнă.

* * *

Сталински суйлав округĕнчи 31-мĕш суйлав участкин агитпунктĕнче Сталин йулташăн пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартакан пысăк выставкă организациленĕ. Кунтах „Одиннадцать Советских Социалистических Республик“ йатлă выставкă тунă.

(ТАСС).

Столицăри суйлав участкисенче

Мускавра суйлав участкисем 1.500 йахăн шутланаççĕ. Хальхи вăхăтра Мускав çывăхĕнчи дачăсенче 100 участкă ытла организацилеççĕ. Мускав совечĕн решенийĕ тăрăх, ийунĕн 20—23-мĕшне суйлав участкисен çурчĕсене пурне те хатĕрлесе çитермеле тата йĕркелемеле. Райсовет председателĕсем суйлав участкисенчи тăвакан çуртсене оборудовани тăвассине хăйсем тĕрĕслеме тивĕçлĕ. Çак ĕçе тума Мускав совечĕн депутачĕсене тата профсойуз активисĕсене, государствă учрежденисенче ĕçлекен работниксене те уйăрнă.

(ТАСС).

Суйлав саккунне пăсаççĕ

Сойузри чылай хуласемпе йалсенче республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене хатĕрленес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пурри палăрать.

Суйлавçăсен спискисенче часчасах суйлавçăсен хушамачĕсене, йачĕсене, çуралнă вăхăта пăсса çыраççĕ.

Ийунĕн 7-мĕш тĕлне Минск хули тăрăх çавăн пек пăсса çырнисене 1 983 тĕслĕх шута илнĕ. Спискăсене çуртсене тата хваттерсене ним кĕртмесĕр хăварнисем пулнă.

Суйлавçăсен спискисенче пăсса çырнисем тата çырмасăр сиктерсе хăварнисем çинчен Харьков хулинчи суйлав комиççисене те зайавленисем нумай пыраççĕ Харьковри Дзержински суйлав округĕнче кăна спискăсенчи йăнăшсене тÿрлетесси çинчен вунă кун хушшинче 769 зайавлени панă.

Иркутск хула совечĕ суйлав участкисен чиккисене çирĕплетнĕ чухне пĕр урама урамĕпех сиктерсе хăварнă. Суйлавçăсен спискисене пит йĕркесĕр тунă. Пин ытла хушаматсене, инициалсене пăсса çырнă. Суйлавçăсенчен нумайĕшĕсем спискăсенче хăйсене тупаймаççĕ. Иркутск хула совечĕ суйлавçăсен зайавленисене пăхса тухас ĕç çине бюрократла пăхать. Зайавленисем папкăсенче вуншар кун тата унтан та ытларах ним тапранмасăр выртаççĕ.

Суйлав саккунне пăсса ĕçлес практикăна халех тĕп тумала.

(ТАСС).

Осоавиахим лагерĕсем уçăлаççĕ

Кăçал Осоавиахимăн Мускав çывăхĕнчи çуллахи лагерĕсене пирĕн тăван çĕршывăн пиншер çамрăк патриочĕсем—Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн тата Тинĕс-Çар флочĕн пулас боецĕсем кайаççĕ.

Ийунĕн 15-мĕшĕнче Химкински водохранилищă хĕрĕнче Осоавиахимăн çуллахи тинĕс лагерĕ уçăлать. Кунта 20 метр çÿлĕш мачтăлă пристăнь тăваççĕ, унтан шыв çинче вĕрентессипе йертсе пыраççĕ. Ку тинĕс лагерĕнче çентаберĕн 1-мĕшчен Хĕрлĕ Тинĕс-Çар флочĕн боецĕсем пулма хатĕрленекен допризывниксем вĕренеççĕ.

Осоавиахим лагерĕсене çавăн пекех Перовăра, Пушкинăра тата Мускав çывăхĕнчи ытти илемлĕ вырăнсенче организациленĕ. Вĕсенче пулас артиллериссем, пулеметчиксем, снайперсем çар ĕçне вĕренеççĕ. Снайперсем вĕрентсе хатĕрлемели лагерьте пăшалран пемели чаплă полигон тунă.

(ТАСС).

Совет пианисĕсен ăнăçĕвĕ

Бельгире пурăнакан совет пианисĕсем йулашки кунсенче çĕнĕ ăнăçусем тунă. Совет пианисĕсем Льеже тата Вервйе хулисенче лартса панă концертсем калама çук пысăк çĕкленÿпе иртнĕ.

Ийунĕн 8-мĕшĕнче Брюççĕлре искусствăсен дворецĕнче Изаи йачĕпе пулнă конкурсра малтанхи висĕ премине илнĕ лауреатсем—Гилельс, Джонстон тата Флийер концерт лартса панă.

Совет пианисĕсене Михновскипе Çеребрйакова ийунĕн 14-мĕшĕнче концерт пама Генте хулине чĕннĕ.

(ТАСС).

Вăйлă çил-тăвăлпа кĕрешсе

Певекере пурăнакансем самольота авари пулассине сирсе йанă

Польарти авиацин самолечĕ Певекене—Чукотски нациле округĕнчи халăхсем пурăнакан пункт—суйлав материалĕсене илсе çитерсе, çĕре анса ларнă хыççăн кăшт тăхтасанах унта вăйлă çил-тăвăл тухса кайнă. Самольота пăр çумне йакăрпе кăкарса лартнă пулнă. Çил-тăвăл çав тери вăйлă пулнипе самольота йакăртан уйăрса йаккала илсе кайма пуçланă. Певекере пурăнакансем унта часах пыма елкĕрсе калама çук йăвăр условинче самольота çунат урлă çавăрăнса ÿкесрен чарнă.

Самольота хулăм хурçăлă тросла тарктăр çумне кăкарнă, анчах вăл та ăна тытса тăма пултараайман. Вăйлă çил-тăвăл, трактăра туртса тата машинăна тытса чаракан çынсемпе пĕрле, самольота сывлăша илсе кайма хăтланнă.

Çав çынсем хăйсене пĕр шеллемесĕр вăйлă çил-тăвăлпа çичĕ сехет хушши кĕрешнĕ. Çак вăхăтра самольота çыран хĕрринчен 500 метр айаккала илсе кайнă. Певекере пурăнакансем аран-аран самольотăн сулахай çунаттинчен тепĕр трактăра кăкарнă та вара сылтăм çунаттинчен краççин пичкисене вунă пичке çакса йанă.

Икĕ метр хулăмĕш пăр çинче шăтăк чавнă. Унта самольот шаççинчен çирĕп канатсемпе кăкарнă пĕрене тата йакăр хунă.

Çапла вара самольота авари пуласран хăтарнă.

(ТАСС).

Çурхи тырăсене 82.864 пин гектар акнă

Ийунĕн 5-мĕшне Сойуз тăрăх çурхи тырăсене 82 864 пин гектар акнă, вăл плана 98 процент тултарни пулать. Колхозсем 76.007 пин гектар акнă, мĕн пур çистемăсенчи совхозсем—6.857 пин гектар акнă. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çистеминчи совхозсем кайа йулса пыраççĕ, вĕсем плана 94 процент кăна тултарнă.

Пахча-çимĕçсене акасси чăтма çук йеритпен пулса пырать. Колхозсем плана 59 процент çеç тултарнă. Иртнĕ çулта çак вăхăта плана 71 процент тултарнă пулнă.

Кантăр акасси те хуллен пулса пырать, çак ĕç пуринчен ытла Белоруççири, Тамбов, Орлов облăçĕсенчи тата Алтай крайĕнчи колхозсенче кайа йулса пырать.

Çĕрулми лартассине 14 автономла республикăсемпе облăçсем кăна пĕтернĕ. Çак культурăна лартасси Вологда тата Чита облăçĕсенче питех те начар пулса пырать.

(ТАСС).

Тырпулсене пуçтарса кĕртме хатĕрленеççĕ

ЙАМАШРИ (Шăхасан р.). „Ударник“ колхоз кăçал кашни гектартан вăтам шутпа 100 пăтран кайа мар тĕштыра туса илессишĕн тăрăшса ĕçлет. Агротехникăла ĕççене вăхăтра туса пырать. Кĕрхи тырă калчисене 74 гектар, çурхисене 35 гектар апат панă. Калчасем пит лайăх çитĕнеççĕ. Çумкурăксемпе кĕрешме кашни бригадăрах звеносем организациленĕ. Çав звеносем хушшинче ăмăртса ĕçлесси сарăлнă çеммĕн сарăлса пырать.

Вăйлă тырпулшăн Йакимăвă йертсе пыракан саккăрмĕш бригада лайăх ĕçленине палăртса хăвармала. Ку бригадă хăйĕн участкине таса тытса тăрать. Тырпулсене уйран пуçтарса кĕме те тĕплĕн хатĕрленет. Йалхуçалăх машинисене, ытти хатĕрсене йусаса лартнă. Витнĕ итеме çÿп-çапсенчен, улăмсенчен тасатнă. Урапасем, михĕсем, шăналăксем хатĕр.

А. Иванов.

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Йапони варварĕсен тискерлĕхĕ

Майăн 28-мĕшĕнчен пуçласа, Йапони авиацийĕ бомбăсем пăрахнипе, Кантонра 3 пин çын вилнĕ та 5 пин çын аманнă.

Англи пичечĕ, Кантон çине бомбăсем пăрахни çинчен пĕлтерекен хыпарсене пичетлесе кăларса, електростанцисене, госпитальсене çĕмĕрни çинчен тата хулара холерă чирĕ сарăлас хăрушлăх çинчен кăтартса çырать. Англири „Дейли Геральд“ йатлă пысăк хаçатăн редакторĕ йатрласа çырнă статйара Англире пурăнакан халăхсене Англи правительствинчен Китайа займсем пама, çавăн пекех тата Йапони таварĕсене бойкот тăвассине вăйлатма чĕнсе çырнă.

Китай пичечĕ: Йапони авиацийĕ Кантон çине татти-сыпписĕр тапăнни Гуандун провинцинчи (унăн центрĕ Кантон пулса тăрать) халăхсем Йапонине хирĕç тăрас вăйĕсене хавшатайман,—тесе çырать. Провинцинче пурăнакан 800 пин çынна хĕçпăшаллантарнă тата вĕсене çар ĕçне вĕрентсе хатĕрленĕ. Йапонецсем: бомбăсем тискеррĕн пăрахни Китай халăхне сасартăк хăратса пăрахать, вăл вара вăрçăна хăвăрт пĕтересси патне илсе пырать, тесе шанни вырăна кĕмерĕ. Йапонецсем кунсеренех пысăк йăвăрлăхсем тĕл пулаççĕ, çав йăвăрлăхсем китайецсем вĕсене хирĕç хыттăн тăнипе пулса пыраççĕ. Йапонецсем економикăлă центр пулса тăракан Кантон хулине çĕмĕрсе тăкма хăтланни Китай халăхĕн хирĕç тăрас хастарлăхне хавшатайман.

(ТАСС).

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Партизансен отрйачĕсенчи Китай хĕрарăмĕсем çар ĕçне вĕренеççĕ. (Сойузфото).

Вырăх тата пăлхану

Итали тата нимĕç оккупанчĕсем хăйсем тытса илнĕ Испани провинцийĕсенче пĕр вăтанмасăр алхасаççĕ.

Вĕсем Испанире чи кирлĕ çимелли йалаласем шутланакан пĕтĕм тырăна тата оливкă çуне илсе кайаççĕ. Пулăççенчен вĕсем тытнă пулăсене туртса илеççĕ, вĕсем тинĕсе тухма килĕшмеççĕ. Оккупантсем тытса илнĕ территорисенче нумай çĕр лаптăкĕсем каçал акмасăрах йулнă. Халăх выçă ларать. Германипе Итали чаçĕсем хăйсем валли çимĕçсене йут çĕршывсенчен çырăнса илеççĕ те ĕнтĕ.

Испани территоринче интервентсем иртĕнсе ашкăнни, çаратни татта саккунсăр ĕçсем туни ĕççыннисен массине çеç мар, пăлхавçăсен офицер чаçĕсенчи çынсене те тарахтарать. Франко патĕнчи тылра Испани çар чаçĕсемпе (пăлхавçăсемпе) Итали чаçĕсем хушшинчи çапăçусем хаяр те пĕтмеççĕ.

Пăлхавçăсен аллинчи Кадикс портĕнче тылра пăлханусем пулнă май вăрçă чухнехи пек йĕрке туса хунă. Франкона тата унăн интервентсемпе каварлашмали политикине хирĕç агитациленĕшĕн арĕслеççĕ тата персе пăрахаççĕ.

Хуласенче вырăнти гарнизонсене Итали тата Германи çарĕсемпе улăштараççĕ, мĕншĕн тесен пăлхавçăсен чаçĕсем Италипе Германи фашисĕсем тата вĕсен агенчĕ Франко Испанире лартнă хăйсен тĕллĕвĕсене пурнăçа кĕртессипе çитĕнÿ тума „шанчăксăр“.

(ТАСС).

Йамайкăри лару-тăру

Йамайкă утравĕ çинче (Англин Караиб тинĕсĕнчи колонийĕ) уйăх ытла ĕнтĕ пăлханусемпе забастовкăсем пыраççĕ.

Йулашки кунсенче забастовкă тăвакан рабочисемпе полици хушшинче çĕнĕрен йунлă çапăçусем пулни çинчен сведенисем килеççĕ. Вăл çапăçусенче 12 рабочи вилнĕ. Нумайĕше аманнă. Сахăр плантацисен хуçисем 150 çын рабочисенчен пытанса пурăнаççĕ. Утрав çинчи сахăр савăчĕсем çÿрри ытла ĕçлемеççĕ.

(ТАСС).

Интервентсен авиацийĕ Испанире

БАРÇЕЛОНĂ, ийунĕн 8-мĕш. (ТАСС). Испанире вăрçă пуçланнăранпа республикă çарĕсем пăлхавçăсен льотчикĕсене 144 çынна тыткăна илнĕ, вĕсенчен 54 льотчикĕ Италирен пынăскерсем пулнă, 46-шĕ—нимĕççем, 44 льотчикĕ кăна Испани çыннисем пулнă, вĕсенчен чылайĕшĕсем вăрçă пуçламĕшĕнче тыткăна лекнĕ пулнă.

Йулашки вăхăтра тыткăна илнĕ пăлхавçăсемпе интервентсен çыннисем хушшинчи льотчиксем—испанецсем çук.

(ТАСС).

Йулашки хыпарсем

Сахăр плантацисенчи забастовкă

ЛОНДОН, ийунĕн 8-мĕш. (ТАСС). „Таймс“ хаçат корреспонденчĕ Кингстонран пĕлтернĕ тăрăх, ийунĕн 7-мĕшĕнче Санта Катерина районĕнче рабочисем сахăр плантацисене вут тĕртсе çунтарса йанă. Полици 8 рабочийе амантнă. Вăтаçĕрти районсенче, тесе çырать корреспондент, агитатăрсем халăха, çĕр рабочисен аллинче пулмала тесе ăнлантараççĕ. Утраври хăшпĕр районсенче рабочисем ĕç укçине икĕ хут ÿстерме ыйтаççĕ. Йулашки кунсем хушшинче Вестморлленд районĕнчи сахăр плантацисенче забастовкă сарăлнă.

„Ньйус кроникл“ хаçатăн Кингстонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, вырăнти влаçсем забастовкă йухăмне чарса лартма пĕтĕм вăйа хураççĕ. Çав майпа нумай полици чаçĕсене мобилизациленĕ, вĕсем рабочисене массăлăн арĕслеççĕ. Полицейскисем демонстрацисене хăвалаçа салатма тата персе пăрахма та приказ илнĕ.

Хамăр сасăсене тăван çĕршывăн чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсене парар!

Никанор Миронăвич ÇЕМЕНĂВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Исанăвă суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Н. М. Çеменăв йулташ 1904 çулта Елĕк районĕнчи Ураскиљт йалĕнче, вăтам хресчен çемйинче çуралнă. Унăн ашшĕ-амăшĕсем револуциччен те, револуци хыççăн та çĕр ĕçĕпе пураннă, 1930 çулта колхоза кĕнĕ.

Никанор Миронăвич 1925 çулта Шупашкарти педагогикă техникумĕнчен вĕренсе тухнă. 1927 çулта Мускаври Н. К. Крупскайа йачĕпе тăракан Коммунисла воспитани академине вĕренме кĕрсе, 1931 ç. вĕренсе тухнă. Ун хыççăн вăл коммунисла аслă шкулсенче ССР Сойузĕнчи халăхсен историне тата Хĕвеланăç Йевропа историне вĕрентекен квалификациле преподаватĕл пулнă.

Н. М. Çеменăв йулташ обшчĕствăлă-политикăлă ĕçре активлă та хастарлă ĕçлесе пысăк опыт пухнă работник. Вăл 1923 çулта комсомола кĕнĕ, комсомол ĕçĕнчи лайăх, çăста организатăрсенчен пĕри пулнă. 1925 çулта Йетĕрне уйесĕнчи Атай вулăсĕнче комсомолăн вулăç комитечĕн ответлă çекретарĕ пулса ĕçленĕ. 1926 çулхи март уйăхĕнче ăна комсомолăн Йетĕрне уйесĕнчи комитетĕнче ĕçлеме илнĕ. Унта вăл агитпроп пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ. Çав çулхинех нойабĕр уйăхĕнче ăна партин уйесри комитечĕн агитпроп пай пуçлăхĕн заместителĕ-пропагандис пулса ĕçлеме илнĕ, ку ĕçре вăл 1927 çулхи çентабĕр уйăхĕччен Мускаври Н. К. Крупскайа йачĕпе тăракан коммунисла воспитани академине вĕренме кайиччен ĕçленĕ.

Мускавра вĕреннĕ вăхăтра Çеменăв йулташ комсомолăн Краснопреçненск райкомĕн пропагандисĕ пулса, Мускав округĕнчи партактив курсĕнче преподаватĕл пулса тата Пролетарский районри каçхи коммунисла аслă шкулта преподаватĕл пулса ĕçленĕ.

Коммунисла воспитани академинчен вĕренсе тухнă хыççăн Никанор Миронăвич Чăваш республикне ĕçлеме килнĕ.

1931 çулта ПСК(б)П Чăваш Обкомĕ Çеменăв йулташа Чулхулари коммунисла университетăн вĕренме кĕме хатĕрлекен чăваш уйрăмĕн пуçлăхĕ туса хунă. Çав вăхăтранах вăл коммунисла аслă шкулăн уйрăмĕнче тата совпартшкулта ПСК(б)П историне тата ленинисăма вĕрентекен пулса ĕçлеме тытăннă.

Çеменăв йулташ 1933 çултанпа пĕр уйăрăлмасăрах парти ĕçĕнче ĕçлет. 1933 çултан пуçласа 1934 çула çитиччен вăл ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн културпроп пайĕн пуçлăхĕн заместителĕ пулса ĕçленĕ. 1934 çултан пуçласа 1935 çула çитиччен Канашри вакунсем йусакан савăтри партком çекретарĕн заместителĕ пулса ĕçленĕ. 1935 çултан пуçласа 1938 çула çитиччен партин Трак райкомĕнче—малтан райкомăн иккĕмĕш çекретарĕ пулса, 1937 çулхи апрелрен райкомăн пĕрремĕш çекретарĕ пулса ĕçленĕ.

ПСК(б)П Чăваш Облăç организацин XVIII конференцийĕ Çеменăв йулташа ПСК(б)П Обком членне суйланă. 1938 çулхи март уйăхĕнче ăна Обком бюровĕн членне суйланă. Çав вăхăтранпа вăл „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн ответлă редактăрĕ пулса ĕçлет.

Никанор Миронăвич Çеменăв йулташ Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăракан, партин тĕп çулĕйĕрĕшĕн активлă кĕрешекен болшевик.

Зарифулла Галиуллăвич ГАЛИУЛЛИН

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Урмайел суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Шăнкăртам районĕнчи „Августăн 1-мĕшĕ" колхоз колхозникĕсем пурте пĕр саслăн пулса хайсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче Урмайел суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Зарифулла Галиуллавич Галиуллин йулташ кандидатурине тăратнă.

Зарифулла Галиуллăвич Галиуллин йулташ 1907 çулта Шăнкăртам районĕнчи Такайĕвă йалĕнчи чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Ашшĕ 1907 çултах вилнĕ. Галиуллин йулташ пурнăçра йăвăр условисемпе ӳснĕ. 6 çултах вăл выçă вилес мар тесе, йалсем тăрăх çăкăр таткисем пуçтарса çӳренĕ. Вăл 1917 çултан 1927 çулччен тĕрлĕ йалсенче кетӳçĕре çӳренĕ. 1927 çулхи апрелтен нойабĕр уйăхчен Иванăвă хулинчи пир-авăр хапрăкĕнче рабочи пулнă. Унтан 1931 çулччен Балахна хулинчи електричествă станцинче бетоншчик пулса ĕçлет.

1931 çулта йала таврăнса вăл колхоза кĕнĕ. 1933—1934 çулсенче колхозра бригадир пулнă. Бригадирта лайăх ĕçленине кура, ăна 1934 çулхи март уйăхĕнчен „Августăн 1-мĕшĕ" колхоз председателне суйланă. Кунта нойабĕр уйăхĕччен ĕçлесен, ăна Такайĕвă йалсовет председателĕ тăваççĕ. Вăл халĕ те çав ĕçрех ĕçлет.

Вăл йертсе пыракан йалсовет нумай ĕçсемпе районра малта пырат.

Галиуллин йулташ Ленин—Сталин партишĕн чĕререн тарса ĕçлекен пултарулă активис.

Петр Матвейĕвич МАТВЕЙĔВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Кăмаш суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Петр Матвейĕвич Матвейĕв йулташ 1903 çулта Тутаркас районĕнчи Турай йалĕнче вăтам хресчен çемйинче çуралнă. Ашшĕ 1921 çулта вилнĕ, амăшĕ 1930 çултанпа колхозра ĕçлет.

Матвейĕв йулташ Турайри икĕ класлă шкултан вĕренсе тухнă, унтан Шăмăршăри 2-мĕш сыпăклă шкулта вĕреннĕ. Анчах килти условине пула унăн вĕренĕве пăрахмала пулнă.

1923 çулта кĕркунне вăл Шупашкарти рабфака вĕренме кĕрет, вĕреннĕ вăхăтра чирленипе вăл каллех вĕренессине вăхăтлăха чарат.

Йалта пурăнса Петр Матвейĕвич обшчĕствăлă ĕçсенче ĕçлеме пуçлат. Вăл ПСÇЛКС членне кĕрет. Турай йалĕнче ПСÇЛКС йачейки организацилет.

1925 çулта Матвейĕв йулташ Хĕрлĕ Çара кайнă. Хĕрлĕ Çарта вăл 1927 çулта ПСК(б)Парти членне кĕрет. Хĕрлĕ Çартан таврăнсан парти, совет, профсойуз ĕçсенче пулат.

Матвейĕв йулташа 1929 çулта Турай йалсовет председателне суйлаççĕ. Йалсовет председателĕнче те вăл лайăх ĕçленĕ, йалсоветне мала кăларнă. Чăвашсен облăçри XVI партконференцийĕ Матвейĕв йулташа ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн Контролљ Комиççи членне суйлат. Партин Чулхулари конференцийĕ ăна ПСК(б)П Крайри Контролљ Комиççи членне суйлат. Ку ĕçре вăл Рабочисемпе Хресченсен Инспекцине пĕтериччен ĕçлет.

1937 çулта Матвейĕв йулташ ПСК(б)П Çĕмĕрле райкомĕн 3-мĕш çекретарĕ пулат.

Петр Матвейĕвич Матвейĕв йулташ пирĕн социалисăмлă ирĕклĕ тăван çĕршывăн шанчăклă ывăлĕ пулнине кура та ĕнтĕ Çĕмĕрле районĕнчи Кăмаш суйлав округĕнчи суйлавçăсем ăна Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç. Халĕ Матвейĕв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Кăмаш суйлав округĕнчи суйлав комиççи регистрациленĕ.

Алексей Михайлăвич РОЗАНĂВ

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Пантăн суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Хĕрлĕ çăлтăр" колхозри колхозниксемпе колхозницăсен суйлав умĕнхи пухăвĕ Алексей Михайлăвич Розанăв йулташа Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртнă.

А. М. Розанăв йулташ—ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн депутачĕ. Вăл Ленин — Сталин аслă партийĕн ĕçĕшĕн, халăх тăшманĕсене хирĕç—троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла бандитсене хирĕç кĕрешсе пиçнĕ çирĕп болшевик. А. М. Розанăв йулташ Горький хулинче, рабочи-платник çемйинче çуралнă. Çак ĕçре унăн ашшĕ 50 çул ытла ĕçлет. Алексей Михайлăвичăн ача чухнехи пурнăçĕ савăнăççăр иртнĕ. Пысăк çемйе, ашшĕн пĕчĕк ĕçукçи, йалаххи нуша,—çакăн пек пулнă ĕнтĕ Розанăв йулташ çитĕннĕ условисем.

А. М. Розанăв йулташ çамрăк чухнех кашни çул çулахи вăхăтра пăрахутсем çинче масљовшчик йе кочегар пулса ĕçленĕ.

1918 çулта А. М. Розанăв йулташ болшевиксен партин сочувствуйушчисен ретне кĕнĕ, 1919 çулхи февралљ уйăхĕнче парти членне куçнă.

1918 çул Партипе совет правителĕстви социалисăмла çамрăк республике тулти тата шалти тăшмансенчен сыхлама рабочи класпа ĕçхресченсен пĕтĕм вăйне мобилизацилеççĕ. Парти чĕннипе А. М. Розанăв йулташ 1918 çулта Октабĕрти социалисăмла револљуци çĕнтерсе илнисене сыхлама кăнтăрти фронта кайат. Фронтри çапăçура аманнă хыççăн Розанăв йулташăн Горький хулине таврăнмала килет. Вăл суранран кăштах сывалсанах, 1919 çулхи ийулљ уйăхĕнче каллех хĕвелтухăçĕнчи фронта Колчака хирĕç çапăçма кайат.

Çапла ĕнтĕ граждăн вăрçи вăхăтĕнче А. М. Розанăв йулташ рабочи клас диктатуришĕн хайне шеллемесĕр кĕрешекен активлă боец пулнă. Вăл хĕвелтухăç фронтĕнче 8-мĕш военно-полевой строителствă пайĕнче çар комиссарĕ пулса ĕçлет. Унтан ăна Туркестан фронтне куçараççĕ те, вăл Хĕрлĕ Çарăн нумай чаçĕсенче çар комиссарĕ пулса ĕçлет.

Граждăн вăрçи пĕтнĕ хыççăн А. М. Розанăв йулташ социалисăм строителствине активлăн хутшăнса ĕçлет. 1924—26 çулсенче вăл Горькири кĕпĕрне сутĕнче, унтан Шарйа хулинче ĕçлет. Шарйара вăл ПСК(б)П райком бюровĕн членĕ пулса обшчĕствăлă-политикăлă пурнăçа активлă хутшăнат.

А. М. Розанăв йулташ партин тĕп çулĕйĕрне пĕр пăрăнмасăр пурнăçа кĕртсе пыракан болшевиксенчен пĕри. Вăл Феликс Дзержинский воспитани панă чеккиссен мухтава тивĕç йалисене сыхласа усрат, халăхăн тăшманĕсене хирĕç—троцкиссене, бухаринĕçсене, буржуалă-националиссене, фашисăмăн пур тĕрлĕ агĕнчĕсене хирĕç хайаррăн кĕрешсе пырат.

Александр Измайлăвич ИЗМАЙЛĂВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Тăвай суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Александр Измайлăвич Измайлăв 1899 çулта Шупашкар районĕнче, Туçикасси Апаш йалĕнче, чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Çемйере мĕн пурĕ 6 çын, вĕсенчен çĕрпе усă куракканни 1 çын кăна пулнă, ыттисем çĕрсĕрех пураннă. Килте пурăнма йăвăр пулнă пирки, унăн ашшĕ—Измаил Васильевич Васильĕв çулран çулах тĕрлĕ çĕрте ĕçлесе çӳренĕ.

1907 çулта Апашри шкула вĕренме кĕрсе, унта 1911 çулччен вĕреннĕ. 1911—1917 çулсенче Шупашкарта вĕренсе учителĕ йатне илнĕ.

1923 çулта Хĕрлĕ Çартан таврăнсан, ăна Апашри кинçен укçа паракан йулташлăх правленин председателне суйлаççĕ. Кунта вăл пĕр çулталăк ĕçленĕ. Çав вăхăтрах вулĕçтăвкомăн членĕ пулнă, кайран вулĕçтăвкомри çĕрĕçпайĕн заведуйушчийĕнче ĕçленĕ. Вăл вăхăтрах Чăвашпроизводсойуз ревиçи комиççин членĕ пулнă.

1925 çулхи çуркунне Чăвашпроизводсойуз правленийĕ Александр Измайлăва йалхуçалăх кооперацин аслă шкулне вĕренме йарат. Шкултан вĕренсе тухсан, 1928 çулта, Чăвашйалкредитсойуз инструктăрĕ пулса ĕçленĕ, кунта лайăх ĕçленĕшĕн ăна аслă инструктăра, кайран сойузăн орготделĕн заведуйушчинче ĕçлеме куçарнă. 1929 çулта декабĕр уйăхĕнче Чăвашуйхирĕçсойуз организациленсен, ăна правлени председателне суйлаççĕ.

Александр Измайлăв 1931 çулта Куславкка районĕнче Рабочисемпе Хресченсен Инспекцийĕн председателĕнче ĕçлет. Кунта пĕр çулта 3 уйăх ĕçлесен, 1932 çулхи апрел уйăхĕнче ПСК(б)П Облăç Контролљ Комиççинче парторгледăвăтелте, унтан Хĕрлĕ Чутай райçĕрĕçпайĕн заведуйушчинче ĕçленĕ. Райçĕрпайĕнче виçĕ çул ĕçлесен ăна МТС директăрĕсен курсне вĕренме йараççĕ. ССР Сойузĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, курсра 7 уйăх вĕреннĕ хыççăн, Александр Измайлăва Тăвайри МТС директăрне йарат.

Александр Измайлăв хăй пурнăçĕнче чылай сиессенче пулнă. Уйесри советсен сиесĕнче, вулăсри сиесра 3 хутчен, районри сиесра—4, Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн X-мĕшпе XI-мĕш çеççийĕсенче, крайри IV-мĕш сиесра тата парти конференцинче пĕр хут пулнă.

ПСК(б) Парти членĕн кандидатне 1924 çулхи ийунĕн 6-мĕшĕнче кĕнĕ, 1926 çулта Мускавра, йалхуçалăх кооперацин практикăлă аслă шкулĕнче вĕреннĕ чух, ПСК(б) Парти членне куçнă.

Ленин—Сталин партийĕшĕн вăйне хурса, хайне шанса панă ĕçре пысăк хастарлăхпа ĕçленине кура Тушкилти „Хĕрлĕ Çар" колхозри колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Александр Измайлăв кандидатурине палăртрĕ.

Ăна Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Тăвай суйлав округĕнче регистрациленĕ.

Измайлăв йулташ çак хисеплĕ чыса тата мухтава тивĕç.

Наталийă Филиппăвнă ЗОТĂВĂ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Тимĕрчкасси суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Наталийă Филиппăвнă 1905 çулта Ирçе Çармăс йалĕнче (Турхан р.) чухăн хресчен çемйинче çуралнă. 1912 çулта йалти шкула вĕренме кĕнĕ. Çитмен пурнăçа пула Наталийă Филиппăвнăн йалти шкултан вĕренсе тухма май килмен. Мĕншĕн тесен, ашшĕ йапун вăрçинче вилнĕ, икĕ пичĕшне те вăрçа илсе кайнă. Çавăнпа та çамрăк Наталин килçуртра пур ĕçе те хăйĕнех тумала пулнă. Вата амăшĕ сывмар пирки ĕçлеме пултарайман. Çак йăварлăхсене пула Наталийă Филиппăвнăн 3 çул вĕренсенех пăрахмала пулнă.

Револљуциччен Наталийă Филиппăвнă ырă пурнăçпа пурăнса кураймăн. Октабĕрти Аслă револљуци пулсан çеç вăл хăйĕн пурнăçне йусама пултарчĕ.

Наталийă Филиппăвнă 1927 çулччен тăван йалĕнче пураннă. Унăн упăшки Кзыл-Арда хулинче Вăтам Ази чукунçулĕ çинче охранăра ĕçленĕ. 1927 çулта Наталийă Филиппăвнă упăшки патне пурăнма кайнă. 1931 çулта Натали Одессă хулине ĕçлеме куçат. Кунта вăра Натали 1-мĕш заставăри кантура çырусем çӳретекен пулса ĕçлеме кĕрсе, 1936 çулччен ĕçлет. 1936 çулта тăван йалне кайала таврăнат.

Наталийă Филиппăвнă ĕççĕр пурăнма йуратман. Вăл мĕн çамрăкранах ĕçпе пиçсе ӳснĕ, йалпанах ĕçлесшĕн çуннă. Одессăран таврăнсан вăл Буинскăри сланĕç рудникне ĕçлеме кайат.

Сланĕç рудникĕнче ăна малтан çĕр чавнă çĕрте ĕçлеме тăратаççĕ. Кунта вăл 6 уйăх ĕçлет. Тăрăшса ĕçленипе хăйĕн пултарулăхне кăтартат, кулленхи нормăна йалаҳнах 140—150 процент тултарса пырат. Рудникре Наталийă Филиппăвнă стахановкă йатне илет.

Н. Ф. Зотăвă йулташ кайарахпа шахтăра çынсем, грузсем антарса хăпартакан машинă çинче ĕçлеме тытăнат.

Н. Ф. Зотăвă йулташ машинăна тĕрĕс ĕçлеттерме тăрăшнă, машинăн кашни пайне, механиçăмне тĕплĕн сăнаса, вĕренсе пынă. Вăл машинискăра ĕçленĕ чухне пĕр авари те туман. Н. Ф. Зотăвă йулташ хăйĕн ĕçри пĕлĕвне техминимум кружокĕнче ӳстерсе пынă.

Наталийă Филиппăвнă сланĕç рудникĕнче ĕçре чăрмантарса пыракансемпе кĕрешнĕ. Завхоз Шишкин ĕçре йаланах чăрмантарса пынă, хĕрарăмсене çын вырăнне шутламан, кулнă, мăшкăланă вĕсенчен. Н. Ф. Зотăвă йулташ завхозăн ирсĕр ĕçĕсене уçса палăртма пулăшнă.

Майданăвă йулташ йаланах прогул тунă. Н. Ф. Зотăвă ăна прогул тума йураманни çинчен астутарнă, ун çинчен комсомол организацине пĕлтернĕ. Çавăн хыççăн Майданăвă çинчен комсомол организацинче сӳтсе-йавнă, Майданăвă хăйĕн йăнăшĕсене йышăнса, малашне йусанма сăмах панă. Халљ Майданăвă тăрăшса ĕçлет, ĕçре пример кăтартат.

Йĕпреç районĕнчи хисеплĕ хĕрарăмсенчен пĕрне —Наталийă Филиппăвнă Зотăвă йулташа Тимĕрчкасси суйлав округĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă. Ăна Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Тимĕрчкасси суйлав округĕнче баллотировкă тума регистрациленĕ.

— Тимĕрчкасси суйлав округĕнчи суйлавçăсем мана Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратни маншăн пысăк чыс, пысăк телей. Епĕ вăл чыса çирĕп тытса пырăп, суйлавçăсем ман çине çавăн пек пысăк шанăç хунине ĕçпе тӳрре кăларăп,—тет Н. Ф. Зотăвă йулташ.

Наталийă Филиппăвнă чăваш халăхĕн йуратнă, Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн чĕререн парăнса ĕçлекен шанчăклă хĕрĕ.

Михайлăв.

Епĕ халăхăн шанчăклă ывăл-хĕрĕсемшĕн сасăлатăп

Нумай пулмаст мана комсомол ретне илчĕç. Халљ епĕ комсомолкă. Комсомола кĕнишĕн савăнатăп. Хамăн пĕлӳлĕхе хăпартассишĕн тăрăшса вĕренетĕп. Ленин—Сталин партийĕ пире çул уçса панишĕн, пирĕн пурнăçа лайăхлатнишĕн тав тăватăп. Çавăнпа та епĕ ийунĕн 26-мĕшĕнче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Советне Ленин—Сталин партийĕшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекен йулташсемшĕн сасăлатăп.

Епĕ РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Шупашкар суйлав округĕ тăрăх регистрациленĕ **Прасковйа Иванăвнă Калиникинăшăн** тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата Ишлей-Покровский суйлав округĕ тăрăх регистрациленĕ **Аниçийа Исайĕвнă Изыкăвăшăн** сасăлап.

Ирĕклĕ пурнăç çулне уçса паракан ПСК(б) Партине, унăн çулпуçне—Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланма килĕшнĕ Сталин йулташа тав тăватăп.

Н. Пикшикова.

Суйлав умĕнхи ăмăрту

Историлĕ кун—ийунĕн 26-мĕшĕ—РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали кун çывхарса килет. Çак чаплă куна Хĕрлĕ Чутай районĕнчи ĕççыннисем çĕнĕрен çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илессишĕн ăмăртăва тивĕçлипе пуçарса пыраççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем кăçал нихăçанхинчен вăйлă тырпул туса илессишĕн ăмăртаççĕ.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсем çуракине начар иртермерĕç. Çак район йалхуçалăх ĕçĕсем тĕлĕшпе Çĕмĕрле районĕпе ăмăртат. Халљхи вăхăтра колхозсенчи пур ĕçсем те суйлава хатĕрленессипе çыхăнса пыраççĕ. Халљ колхозсенче çумкурăксене çумлаççĕ, тырпулсене уйран пуçтарса кĕме хатĕрленеççĕ. Тырпулсене уйран пуçтарса кĕнĕ чухне кирлĕ машинăсене йусаççĕ.

Май уйăхĕн йулашки кунĕсенче ăмăртса ĕçлекен Хĕрлĕ Чутай тата Çĕмĕрле районĕсенчи колхоз председателĕсен, çĕрĕç работникĕсен пĕрлехи канашлăвĕ пулса иртрĕ. Çак канашлура икĕ район кăçалхи çуракине мĕнле иртернине пăхса тухрĕç тата тырпулсене уйран пуçтарса кĕме хатĕрленесси çинчен сӳтсе-йаврĕç. Çакăн хыççăн, кашни район йалхуçалăх ĕçĕсемпе хăй çине татăклă обйазателствă илчĕ.

Амăртакан Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле районĕсем ирхи çĕртме сухине таса тытса тăма, кĕске срукрах йалхуçалăх машинисене, çивитилĕ итемсене йусаса çитерме, кашни бригадăрах витнĕ итемсем тума, ампарсене тасатса, дезинфекци тума пулчĕç. Ийулĕн 5-мĕшчен кашни районра машиноведсен курсне ирттермеле. Кунпа пĕрлех канашлура пулнисем ийунĕн 26-мĕшĕ тĕлне государствă умĕнчи обйазателствăсене парса татма пулчĕç.

Халљ икĕ районĕнче те илнĕ обйазателствăсене пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Кашни колхоз суйлав кунне—ийунĕн 26-мĕшне йалхуçалăхĕнче тунă пысăк çитĕнӳсемпе, государствă умĕнчи парăмсене парса татнипе кĕтсе илессишĕн тăрăшат.

Иван Захарăвич ЗАХАРĂВ

Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Турхан суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Турхан районĕнчи „Комсомолец" тата Кирăв йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксен суйлав умĕнхи пухăвĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Иван Захарăвич Захарăв йулташа палăртрĕç.

Иван Захарăв йулташ Йетĕрне районĕнчи Чебакăвă йалĕнче, чухăн хресчен çемйинче 1894 çулта çуралнă. Вăл йăвăр пурнăç условийĕнче ӳснĕ. Çемйе пысăк пулнă. Çĕр сахал пулнă. Ашшĕ çемйене ирĕкре ĕçлесе тупнипе тăрантарса усранă. 1906 çулта Захарăв йулташ чиркӳ-приход шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Кун хыççăн ашшĕ хуçалăхĕнче 2 çул хушши пураннă. 1908 çулта Йетĕрне хулинчи училишчăна вĕренме кĕнĕ, унта 1912 çулччен вĕреннĕ. Кунтан вĕренсе тухнă хыççăн, 3 çул вĕренмели педагогикă курсне кĕрет, унтан 1915 çулта вĕренсе тухса, халăх учителĕ йатне илет.

1914 çулта империалисăмла вăрçă пуçлансан, Захарăв йулташа 1915 çулхи ийулљ уйăхĕнче патша çарне илеççĕ. Вăл Кăнтăрпа Хĕвелтухăçри фронтра пĕр çул хушши кĕçĕн офицер пулнă, 1917 çулхи октабĕр уйăхĕнче ăна командира суйланă, кунтан 1918 çул пуçламĕшĕнче çеç таврăннă.

Кивĕ çартан таврăннă хыççăн, Захарăв йулташ 1918 çулхи август уйăхĕччен çĕрĕçепе ĕçленĕ, çав вăхăтрах вăл йалсовет членĕнче тăнă.

1918 çулхи çентабĕр-нойабĕр уйăхĕсенче учителте ĕçленĕ, шкулсенче ĕçлекен работниксен сойузĕн вулăсри председателĕ пулнă.

Çак çул çамрăк социалисăмла советлă республикă çине тапăнса совет власне пĕтерме ĕмĕтленнĕ Краснов, Колчак, Деникин тата ытти генералсен тапăнăвне хирĕç хайаррăн кĕрешесси пуçланнă. Захарăв йулташ Социалисăмла Аслă револљуци çĕнсе илнисене, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ ретĕнче пулса, паттăрăн сыхлат. Империалисăмла вăрçăра илнĕ пĕтĕм опыта Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ çĕнтерӳ тăвас ĕçе парат. Малтан Камышинăри 1-мĕш бригадăн Царицинри 4-мĕш полк командирĕн помошникĕ, кайран çак полкăн командирĕ пулнă. Кунта вăл 1918 çулхи декабĕр уйăхĕнчен пуçласа 1919 çулхи август уйăхĕччен ĕçленĕ.

1919 çулхи август уйăхĕнче ăна 23-мĕш дивизинчи 206-мĕш стрелковăй полкăн командирĕ тăваççĕ. Интервентсене хирĕç кĕрешнĕ çапăçура икĕ хут аманнă. 1920 çулхи март уйăхĕнче сывалса тухнă хыççăн, ăна стройевой мар службăра анчах йурăхлă тесе йышăннă. Социалисăмла обшчĕствăн тăшманĕсемпе çапăçнă çĕрте хăйне лайăх палăртнăшăн ăна Хĕрлĕ Йалав орденĕ парса наградăланă. Кунсăр пуçне Сталинград хулинчи рабочисем ăна сăран тумтир парса наградăланă.

1920 çултанпа Захарăв йулташ социалисăмла обшчĕствă ĕçĕнче активлăн ĕçлет. Йетĕрне уйесĕнчи çар комиссарĕн помошникĕ, уйесри çĕрĕç Управленин начальникĕ тата ытти ĕçсенче те ĕçленĕ. Районсем тунă хыççăн, 1927 çулта Хĕрлĕ Чутай райĕçтăвкомĕн председателĕ пулнă.

1928 çулхи нойабĕр уйăхĕнчен пуçласа ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Мелиозем Управленин начальникĕнче, 1930 çулхи нойабĕр уйăхĕнчен пуçласа Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ пулса ĕçленĕ. Вăл халăх комиссариатĕнче ĕçленĕ вăхăтра оперативлă йертсе пынипе республикре пĕтĕмпех çĕр йĕркелӳ туса ирттернĕ. 1931 çулхи декабĕр уйăхĕнче ăна Чăвашколхозсойуз председателне суйланă.

1932 çулхи декабĕр уйăхĕнченпе Захарăв йулташ парти ĕçĕнче ĕçлет. 1934 çулхи йанварччен ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн агитаципе массăлă ĕç пайĕн заведуйушчийĕ, 1934 çулхи йанвартен 1937 çулхи август уйăхĕччен ПСК(б)П Улатăр райкомĕн çекретарĕ пулса ĕçлет.

1937 çулхи август уйăхĕнче Захарăв йулташа Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарне лартнă.

1931 çултанпа Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком членĕнче, тата 1932 çултанпа ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн пленум членĕнче тăрат.

Иван Захарăвич Захарăв йулташ йаланах Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн кĕрешсе пынă.

Антонăвăпа Белоруссăв йулташсем— суйлавçăсем патĕнче

Пилĕкçĕр суйлавçă ытла пухăнчĕç ийунĕн 5-мĕшĕнче Сиккасси суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи пухăва. Суйлавçăсем çак пухура Канаш суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатпа—Канашри вакунсем йусакан савăтри стахановкă Йекатеринă Антонăвна Антонăвă йулташпа тата Сиккасси суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидатпа—ПСК(б)П Канаш райкомĕн пĕрремĕш çекретарĕ Павел Ананйĕвич Белоруссăв йулташпа тĕл пулчĕç.

Пухура чи малтан Сиккассинчи вăтам шкул директăрĕ М. Г. Гаврилăв йулташ тухса каларĕ:

— Епĕр РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хамăр тăратнă кандидатсемпе курнăçса калаçма пухăнтăмăр. Верховнăй Советсене Сталинла Конституци тăрăх суйласси вăл—вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк çĕнтерÿ, вĕçĕмсĕр савăнăç. Пирĕн Совет çĕршывĕнче чи кĕске—7 сехетлĕ ĕç кунĕ. Пирĕн совет çĕршывĕнче кашни гражданинăн ĕçлев, канăç тата вĕренÿ прави пур. Вĕсене пире коммуниссен партийĕ туса пачĕ. Çавăнпа та епĕр РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене Ленинпа Сталин партишĕн чĕререн тăрса ĕçлекенсене суйлатпăр. Чăваш республикĕнчи ĕççыннисем хăйсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама çĕршывăн паттăр ывăл-хĕрĕсене палăртрĕç. Епĕр РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Йекатеринă Антонăвă тата Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Павел Белоруссăв йулташсене палăртрăмăр. Вĕсем иккĕшĕ те ĕçре пиçнĕ большевиксем. Çавăнпа та епĕ пур суйлавçăсене те ийунĕн 26-мĕшĕнче вĕсемшĕн сасăлама чĕнетĕп.

— Сталинла Конституци тăрăх, епĕр, Совет Сойузĕнчи пур граждансем те, пĕртан правасемпе усă куратпăр,—тет Сиккасси вăтам шкулĕнчи 46 çулхи учителницă А. Л. Петровă йулташ.—Пирĕн умра халĕ вĕренме те, ĕçлеме те, канма та права пур. Елĕк епĕр, хĕрарăмсем, çакăн пек суйлава хутшăнма мар—урама та тухайман. Пире ун чухне çĕр те паман. Халĕ епĕр арçынсемпе пĕр танах пур правасемпе те усă куратпăр. Пăхăр-ха Антонăвă йулташа, вăл чухăн хресчен çемйинчен тухнă. Халĕ епĕр ăна Канаш суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрăмăр. Епĕр, Сиккасси суйлав округĕнчи суйлавçăсем, Антонăвăпа Белоруссăв йулташсемшĕн сасăлатпăр.

Пухура Й. А. Антонăвă тата П. А. Белоруссăв йулташсем тухса калаçрĕç.

Антонăвă йулташ сăмахĕнчен

— Йулташсем, 1937 çулхи декаберĕн 12-мĕшĕнче епĕр ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйларăмăр Ун чухне епĕр пирвайхи хут хамăрăн Верховнăй Совета Сталинла Конституци тăрăх суйларăмăр. Ийунĕн 26-мĕшĕнче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлатпăр. Есĕр, Сиккасси суйлав округĕнчи суйлавçăсем, мана РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртса, ман çине пысăк та ответлă шанăç хутăр, пысăк чыс турăр. Епĕ вăл чысшăн çирĕппĕн ĕçлеме пулатăп. Вăйа тата пултарулăха Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн кĕрешес ĕçе хуратăп.

Белоруссăв йулташ сăмахĕнчен

— Йулташсем! Пирĕн совет çĕршывĕ çирĕм çул хушшинче вăйлă державă пулса тăчĕ. Совет Сойузĕпе пĕрлех пирĕн Чăваш республикĕ те ÿссе пыраť. Патша самани вăхăтĕнче вак-тĕвек савăтсем те сахал пулнă, халĕ пысăк комбинатсем ÿссе ларчĕç. Ĕçхалăхĕн кулђтурлăхĕ те ÿссех пыраť. Епĕр вĕсене коммуниссен партийĕ тата Сталин йулташ йертсе пынипе турăмăр. ССР Сойузĕн Сталинла Конституцинче Октăберти револђуци çĕнтерĕвĕсене пĕтĕмпех çырнă. Çакăнпа пĕрлех суйлав çиçтемине те улăштарнă. Халĕ пирĕн суйлавсем ĕлĕкхи пек мар, йăлтах урăхла пулса иртеççĕ. Çĕнĕ суйлав çиçтемипе епĕр 1937 çулхи декаберĕн 12-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйларăмăр. Халĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлатпăр. Унта епĕр коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕшĕн, Маркс, Енгĕлс, Ленин, Сталин ĕçĕсене, вĕсен хушăвĕсене çирĕппĕн пурнăçласа пыракансене, ĕçхалăхĕн интересĕсемшĕн тăрăшакансене суйлатпăр.

Есĕр мана Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлама кандидата тăратрăр. Ман çине пысăк шанăç хутăр. Епĕ вăл шанăçа партипе правителствă хушнă ĕçсене çирĕппĕн пурнăçласа пынипе, хамăн пĕтĕм пултарулăхпа вăйа парса ĕçлесе пынипе ответлеме пулатăп.

* * *

Пухури суйлавçăсем пĕр саслăн суйлав кунĕнче хăйсен сасĕсене тивĕçлĕ кандидатсемшĕн—Антонăвă тата Белоруссăв йулташсемшĕн пама пулса решени йышăнчĕç.

Тăрăшакан агитатăрсем

Çавалкас Марат (Вăрнар р.) суйлав участкинче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă çĕре 316 суйлавçă хутшăнмала. Пайанхи куна 316 суйлавçăран 300 суйлавçăна суйлав Положенисене вĕрентес ĕçе хутшăнтарнă. Колхозниксене тата ĕççынни йединоличникĕсене суйлав Положенисене вĕрентес тĕлĕшпе ку суйлав участкинче 11 агитатăр ĕçлеççĕ. Агитатăрсем лайăх вĕрентес йенĕпе пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Йалсоветри агитатăрсенчен М. Кустин, В. Кустин, Тиханăв, Т. Белов йулташсем суйлавçăсене суйлав Положенисене вĕрентес тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ. Агитацилĕ-массăлă ĕçе черетри задачăсемпе çыхăнтарса пыраççĕ.

Халђхи вăхăтра агитатăрсем суйлав Положенисене вĕрентнисĕр пуçне РСФСР Верховнăй Советне депутата суйланма Вăрнар суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшÿ панă И. В. Дубăв йулташ, Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма Çавалкас суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшÿ панă М. И. Калинин йулташсен автобиографийĕсене каласа кăтартаççĕ.

Н. Козлов.

Суйлавçăсен пухăвĕ

Ийунĕн 9-мĕшĕнче Чапайĕв посолкинче йармăркă пулакан площчĕтре РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали 14-мĕш суйлав участкинчи суйлавçăсен пĕрлехи пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пухăва çак участкă тăрăх ĕçлекен доверĕннăй Таврина йулташ уçрĕ. Пурĕ 223 суйлавçă пынă пухăва. Унта тĕнчери лару-тăру çинчен Стољаров йулташ (ПСК(б)П Обкомĕнчен) доклад туса пачĕ.

Пухура урам комитет председателĕ Мочаловă, 14 суйлав участкăри доверĕннăй Блаженăвă йулташсем тухса каларĕç. Пухура РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă кандидат Калинкина йулташ пулчĕ, вăл сăмах тухса каларĕ.

Пуху хыççăн Совет правине вĕрентекен шкулăн хорĕ „Мускав", „Вдоль деревни" йурăсем, суйлав частушкисем йурласа пачĕ. Хора В. Воробйов йулташ йертсе пычĕ. Кунтах Чăваш АССР Йустици Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекенсен коллективĕнчен хăшĕсем йурласа, ташласа кăтартрĕç, сăвăсем каласа пачĕç т. ыт. те.

Суйлавçăсем вăхăта савăнăçлăн иртерчĕç. Вĕсем ташăсем ташларĕç, вăйăсем вылљарĕç.

Колђски çурутрав çинче никĕл шăратмали комбинат тăваççĕ.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Комбинатăн металлурги цехĕн пĕр кăмаки.

Хайкин фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Шупашкар райкомĕ коммуниссен сĕнÿвĕсене пурнăçлас ĕçре

Пуçламĕш парторганизацисен отчотпа суйлав пухăвĕсенче тата районри парти пухăвĕнче коммуниссем ПСК(б)П Шупашкар райкомне пуçламĕш парторганизацисене çителĕксĕр йертсе пынăшăн хытă критиклерĕ. Парти райкомĕ пропагандиссене, агитатăрсене кирлĕ пек пулăшса пыман. Пухусенче çав çитменлĕхсене пĕтерме татăклă сĕнÿсем панă.

Парти райкомĕ коммуниссен сĕнĕвĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе татăклă мероприйатисем йышăннă. Райком инструктăрĕсем ĕç планĕсем тунă. Ку плансене мĕнле пурнăçланине кашни уйăхрах райком çекретарĕсен тĕрĕслесе тăмала. Районри инструктăрсен ĕçĕсене 3 уйăхра пĕрре, уйрăм ыйтусемпе кашни уйăхрах райком заçеданинче сÿтсе йавмала. Райком инструктăрĕсен пуçламĕш парторганизацисене, уйрăмах уйрăм коммуниссене ĕçре пулăшса пырасси тĕп вырăн йышăнмала.

Кашни уйăхрах пĕччен коммуниссемпе канашлусем туса иртермеле, вĕсем мĕнле ĕçлени çинчен райком заседанинче те ыйтусем лартмала.

20 кунта пĕрре парторгсемпе канашлусем иртермеле. Райкомăн заçеданийĕсенче парторгсен доклачĕсене сÿтсе-йавмала. Райком çекретарĕсен пуçламĕш парторганизацисене вырăна кайса пулăшмала. Райком çекретарĕсен уйăхра пĕрререн кайа мар пуçламĕш парторганизацисен пухăвĕсенче пулмала. Кашни парторгăн, пуçламĕш парторганизацин ĕç планне тумала. Райком инструктăрĕсен пуçламĕш парторганизацисем ку плансене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесех тăмала. Çавăн пекех коммуниссем парти порученисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслемеле. Парти райкомĕ хăшпĕр чухне уйрăм коммуниссен ĕçĕсене пуçламĕш парторганизацисене пĕлтермесĕрех райкомра сÿтсе йавнă. Ку тĕрĕс мар йăлана пĕтермеле.

Иртнĕ çулта райком парти вĕрентĕвне кирлĕ пек йертсе пыманнипе кура кружоксенче вĕренÿ ĕçне йапăхтарса йанă. Чылай кружоксенче занђатисем иртермен, вĕренÿ пахалăхĕ начар пулнă.

Çак çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе парти райкомĕ кашни кружокра занђатисене план тăрăх, пĕр сиктермесĕр иртерме хушнă. Коммуниссем занђатисене мĕнле çÿренине парторгсене тĕрĕслесе тăма, занђатисене çÿремен коммуниссем çинчен парти пухăвĕсенче сÿтсе-йавма хушнă. Кружоксенче кăтартнă срукcенче занђатисем мĕншĕн пулманнине тĕрĕслемеле, кирлĕ пулсан ку ыйтăва райком заçеданинче лартмала тунă. Ку ĕçре пропагандиссен те райкома пулăшса тăмала. Кашни занђати хыççăнах, занђати мĕнле иртни çинчен, занђатире кам пулманни çинчен пропагандисăн парти райкомне пĕлтермеле.

Кашни пропагандисăн занђати умĕн хăйĕн занђатине иртермели планĕпе райком çекретарĕ Никитин йулташ патне пымала. Анланман ыйтусем тăрăх райком çекретарĕнчен консулђтаци илмеле. Кружок руководителĕсен вĕренекенсене куллен пулăшса пымала. Вĕсене конспектсем çырма вĕрентмеле, карттăсемпе паллаштармала тата ыт. те. Парти кабинечĕн пропагандиссемпе çеминарсем иртермеле, консулђтаци ĕçне йеркелемеле. Райком çекретарĕсен кашни уйăхрах пĕр хутран кайа мар кружокри занђатисенче пулмала.

Парти райкомĕ комсомол кружокĕсене йертсе пыма уйрăм коммуниссене çирĕплетнĕ. Ку коммуниссем мĕнле ĕçленине райком заçеданинче сÿтсе йавмала. Çавăн пекех районра комсомол политвĕренĕвĕ мĕнле пыни çинчен комсомол райкомĕн политвĕренÿ пайĕн пуçлăхĕн докладне 3 уйăхра пĕр хутран кайа мар райком заçеданинче сутсе йавмала.

Районри советпа хуçалăх организацисен ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе кашни уйăхрах советпа хуçалăх, суту-илÿ организацисен руководителĕсемпе канашлусем иртермеле. Ку канашлусенче вăл руководителсен уйăхри ĕçĕсене сÿтсе йавмала.

Йалсоветсемпе колхозсен ĕçĕсене лайăхлатас май, уйрăм йалсоветсемпе колхозсен çумне райком членĕсене çирĕплетмеле тунă. Вĕсен ĕçĕсене райком тĕрĕслесе тăраť. Çавăн пекех райком кашни квартăл вĕçĕнче йалсовет, колхоз председателĕсен тата районри актив канашлăвĕсене иртерме пăхнă. Советпа хуçалăх организаци руководителĕсем мĕнле ĕçлени çинчен райком заçеданийĕсенче, парти пухăвĕсенче те сÿтсе-йавмала тунă.

Райком инструктăрĕсен советпа хуçалăх организацисенче ĕçлекен коммуниссемпе лайăхрах ĕçлемеле. Хуçалăх организацисенчи коммуниссен пур ĕçре те пример кăтартса районра пĕрремĕш вырăн йышăнассишĕн тăрăшмала. Райком çекретарĕ Караушĕв йулташăн, советпа хуçалăх организацисен руководителĕсем райком решенисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесех тăмала.

Парти райкомĕ колхозсем йалхуçалăх ертелĕн уставне мĕнле пурнăçланине тĕрĕслеме пуçланине вĕçне çитермеле. Йалхуçалăх ертелĕн уставне пăснине кăтартакан кашни фактăнах колхозниксен пухăвĕсенче сÿтсе йавмала. Кулђтурăпа çутĕç учрежденисен (вулав çурчĕсем, колхоз клубĕсем т. ыт.) ĕçĕсене лайăхлатас май, халĕ райкомпа райçутĕç пайĕ уйрăм план тăваççĕ. Çавăн пекех райком агитатăрсемпе татăклă ĕçлеме уйрăм план тунă.

Çак çулте кăтартнă мероприйатисене пурнăçлас май парти райкомĕ ийуњ уйăхĕ валљи план тунă. Ку планри ыйтусене пурнăçлама тытăннă та ĕнтĕ. Ийунĕн 1-мĕшĕнчех парторгсен канашлуне туса иртерчĕ. Канашлура отчотпа суйлав пухăвĕсен итогĕсем тата коммуниссен кăтартăвĕсене пурнăçламали майсем çинчен сÿтсе йавнă. Уйрăм парторгсем пуçламĕш парторганизацисем отчотпа суйлав пухăвĕсем йышăннă решенисене мĕнле пурнăçлани çинчен каласа панă.

Алђгешĕври пуçламĕш парторганизаци (парторгĕ Антонăвă йулташ) отчотпа суйлав пухăвĕсем иртнĕ хыççăн партилĕ-политикăлă ĕçе лайăхлатма тытăннă. Пĕр çынна парти ретне илнĕ, теприне кандидатран члена куçарнă. Халĕ каллех тепĕр çынна партине илме хатĕрлесе çитерчĕ. Политикăлă агитаци ĕçне лайăхлатнă. Суйлав хыççăн коммуниссен ответлăхĕ хăпарнă, парти порученисене лайăхрах пурнăçлама тытăннă. Парторганизаци план тăрăх ĕçлесе пыраť.

Канашлура 5 парторгăн ĕç планĕсене сÿтсе йавнипе парторгсене ĕç планĕсене мĕнле тумалине вĕрентнĕ. Парти пуçламăш организацисем ку плансене мĕнле пурнăçланине райком тĕрĕслесе тăраť.

П. Перлов.

Суйлав кампанинчи тĕне хирĕç пропагандă задачисем

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн VI-мĕш пленумĕ РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленесси çинчен йышăннă постановленире тĕне хирĕç пропагандăна вăйлатасси çинчен парти райкомĕсене Вăрçăлă Турăсăрсен Сойузĕн районти совечĕсене пулăшса пымали çинчен уйрăмăнах кăтартса хăварчĕ.

Пленум кăтартăвĕсенчен Вăрçăлă Турăсăрсен Чăваш совечĕ тата Турăсăрсен районри совечĕсем хăйсен практикăлă ĕçĕсенче ку таранччен те тивĕçлĕ вывăдсем туманха. Парти райкомĕсем те турăсăрсен ушкăнĕсене ĕçре кирлĕ пулăшу парса пымаççĕ.

Тĕне хирĕç кĕрешес ĕçре парти Обкомĕн кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртсе пыманни чылай районсенче питех те палăрса тăраť. Ку таранччен те турăсăрсен райсовечĕсенче суйлав кампанине хутшăнса ĕçлесси çинчен пленумсем пухса сÿтсе йавман. Улатăр, Йетĕрне, Тутаркас райсовечĕсем хăйсен пленум членĕсене нийепле те пухаймаççĕ. Улатăр райсовечĕн ответлă çекретарĕ Андронăв: „мана без целью суйланă, манăн ахалех ĕç нумай", тесе ĕçлемесĕр ларать. Республикăри вăрçăлă турăсăрсен совечĕ те райсоветсемпе оперативлă йертсе пымасť, çавăнпа та районсенче ĕç начар пыраť.

РСФСР Верховнăй Советне тата Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе агитаци ĕçĕ вăйлансах пыраť пулсан та, тĕне хирĕç кĕрешес ĕçпе çав агитаци ĕçне участкăсенче йапăх çыхăнтарса пыраççĕ. Районри турăсăрсан совечĕсем суйлав комиççисемпе тачăн çыхăнса ĕçлемеççĕ, хăйсем йĕнчен те пуçарулăх кăтартса пымаççĕ.

Турăсăрсен совечĕсен, йачейккисен РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампани вăхăтĕнче ĕçлемесĕр лăпланса лармала мар, тĕне хирĕç кĕрешес ĕçе мĕн пур вăйа хурса вăйлатмала

Чи малтан çакна манас пулмасť: суйлав кампани вăхăтĕнче совет влаçне хирĕç кĕрешекенсем—тăшманла елементсем çывăрмаççĕ, вĕсем тĕрлĕ майпа суйлав кампанинче чăрмантарма тăрăшаççĕ. Тăшманла елементсем тĕн сĕрĕмĕпе усă кураççĕ, вĕсем тĕн çыннисемпе çыхăнма тăрăшаççĕ. Çектантсен ирсĕр ĕçĕсем чылай палăраççĕ. Сăмахран, Хугар йалĕнче (Çĕмĕрле районĕ).

Пуп турра ĕненекен çынсене пухса, ССРС Верховнăй Совет суйлавне хирĕç кĕрешме йатарласа кружоксем уçнă пулнă. Тутаркас районĕнчи хăшпĕр йалсенче (Анчар, Шатракасси) тăшманла елементсем, çектантсем суйлава хирĕç ирсĕр ĕçсем туса пынă. Хĕрлĕ Чутай районĕнче те суйлав кампани вăхăтĕнче чиркÿ çыннисем, пупсем контрреволђуцилĕ ĕçсем туни пулкаланă.

Суйлав вăхăтĕнче пупсем, çектантсем „ĕçлеме" тĕрлĕ метăдпа, тĕрлĕ формăпа тухаççĕ: пĕрисем хупнă чиркÿсене уçасшăн тăрăшаççĕ, теприсем—хăйсене ытла та совет майлă пулнă пек кăтартса, маскăпа витĕнсе тухаççĕ, йе тĕн сĕрĕмĕпе арпашакан çынсем урлă сăтарлă ĕçсем тăваççĕ.— РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампани вăхăтĕнче те пупсен, çектантсен ирсĕр ĕçĕсем хăшпĕр районсенче палăраççĕ. Шăхасан, Тутаркас районĕсенчи хăшпĕр йалсовечĕсенче суйлава хирĕç ирсĕр сăмахсем сарса çÿренĕ. Суйлав кампани вăхăтĕнче çавнашкал контрреволђуцилĕ агитацине хирĕç большевикла кĕрешмеле, большевикла сыхăлăха тата çÿлерех хăпартмала. Троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла тăшмансен йулашкисене тĕпĕ-йĕрĕпе çапса салатмала.

Паллах ĕнтĕ, турăсăрсен районри организацийĕ хăй пĕр пĕччен суйлав кампанинче тĕне хирĕç пропагандă ĕçне вăйлатма пултараймасť. Вĕсене районри агитатăрсем, пропагандиссем, лектăрсем, учителсем питĕ пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Турăсăрсен организацисем хăйсем йĕнчен пуçарса пырса, суйлав комиççисемпе тачă çыхăнмала. Тĕне хирĕç пропагандăпа агитаци тĕмисене суйлав участкинчи ĕç планне кĕртмеле. Хăш йалта, колхозра, хăçан, мĕнле калаçусем тумалине палăртса хумала. Иртнĕ суйлав кампанинчи опытпа усă курмала, иртнĕ суйлавра пирĕн республикăра сахал мар тĕне хирĕç калаçусем туса иртернĕ.

Тĕне хирĕç пропагандăн содержанийĕ халђхи суйлав вăхăтĕнче те РСФСР тата Чăваш АССР Конституцисене, суйлав Положенисем çинчен массăна тĕплĕн ăнлантарасси пулмала. Чăваш АССР Конституцин 91 статйинче каланă: „Граждансен совĕç ирĕклĕхне пурнăça кĕртес майпа Чăваш АСС Республикĕнче чиркĕве патшалăхран, шкула чиркÿрен уйăрнă. Пур граждансен те тĕне тытма та, тĕне хирĕç вĕрентме те ирĕклĕх пур". Çак статйана пупсем хăйсем майлă ăнлантарасшăн, вĕсем: „Конституци тĕн майлă, халђ ĕнтĕ тĕншĕн агитаци тума никам та чарма пултараймасť" — тесе суйă сăмахсем сарнă. Совет влаçĕ, коммуниссен партийĕ нихăçан та тĕн майлă пулман, Ленин хăйĕн ĕмĕрĕнче тĕне хирĕç сахал мар кĕрешнĕ, вăл ĕç халăхне пупсен, мăнастырсен, помещиксен, капиталиссен експлоатацинчен кăларасшăн хастарлăн кĕрешнĕ. „Тĕн вăл халăх наркăмăшĕ"—тесе вĕрентнĕ вăл. Пирĕн çĕнĕ Конституци те тĕне хирĕç пропагандă сарма ирĕк параť.

Турăсăрсем массăсене РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисенче депутата суйлама кандидатсем тăратас йĕркесем çинчен мĕнле каланине тĕплĕн ăнлантармала. Паллах, тĕн ушкăнĕсем кандидатсем тăратма пултараймаççĕ, кандидатсем тăратма вĕсен права çук, мĕншĕн тесен, вĕсем ĕç халăх организацисем мар, тĕн ушкăнĕсем ĕç халăхĕн интересне хирĕç пыраççĕ. Чиркÿ организацисем пурте социалисăм строителствине чăрмантарса пыраççĕ, çавăнпа та хăйсенчен кандидат тăратма пултараймаççĕ.

Тĕне хирĕç пропагандăпа халђхи вăхăтра уйрăм граждансем хушшинче, турра ĕненекен çынсем хушшинче ĕçлесси тĕп вырăн йышăнса тăмала. Турра ĕненмен çынсем хушшинче ĕçлени çителĕклĕ мар. Пупсен, çектантсен агитацине хирĕç хамăр большевикла агитацине вăйлăлатса, турра ĕненекен граждансене тĕн сĕрĕмĕнчен хăтармала. Анчах тĕне хирĕç кĕрешес ĕçре административлă метăдпа ĕçлени пулмала мар. Участкăсенче докладсем, лекцисем, калаçусем туса иртермеле, вăл тĕлĕшпе районри учителсен, врачсен, пропагандиссен вăйĕсемпе усă курмала. Комсомол организацисем çак ĕçе тимлĕн хутшăнмала. Тĕне хирĕç пропагандăпа агитацине вăйлă сарса пырса, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене большевикла иртерер.

М. С. Цветков.

Суйлав пулмали çуртра

КАНАШ. Сухайкасси Канаш хулинчен икĕ çухрăмра ларать. Пысăк йал. Канашран пырса кĕнĕ çĕртех йалăн ту вĕçĕнче урама тăрăхла пысăк та илемлĕ çурт. Унăн тăррине хĕрлĕ йалав çилпе вăркăшни катаранах курăнаť. Вăл çуртăн алăкĕ çине пысаккăн „Ийунĕн 26-мĕшĕнче пурте РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама килĕр!" тесе çырса çапнă. Çак çурт—колхозăн клубĕ.

Клуба шала кĕрсенех, тасалăха туйса илетĕн. Кунтах суйлав комиççийĕ те вырнаçнă. Пулĕмри сĕтел çине суйлав саккунĕсем çинчен калакан кĕнекесене йĕркипе майлаштарса хунă.

Участкăри суйлав комиççи вырнаçнă пÿлĕмпе йунашар тепĕр пысăк пÿлĕм. Ийунĕн 26-мĕшĕнче ку пÿлĕме килсе суйлавçăсем РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама халăхăн чи шанчăклă ывăл-хĕрĕсемшĕн вăрттăн сасăлаççĕ.

Çтенасем çинче партипе правителствă руководителĕсен портречĕсем. Йĕркен-йĕркен ширмăсене тăратса 6 кабинă туса хатĕрленĕ. 6 суйлавçă харăс кĕрсе сасăлама пулаť. Кабинăсенче шăтăк-çурăк курăнмасť. Вĕсен çтенисене картинăсемпе илемлетнĕ. Кашни кабинăрах пĕрер сĕтел, сĕтел умĕнче авса тунă хыçлă пукан. Сĕтелсем çинче шĕвĕртсе хунă пĕрер кăранташ тата черниљницăпа ручкă.

Сухайкасси йалсовечĕ колхозсенче вут-кăвартан сыхланас ĕçе кирлĕ пек йĕркеленĕ.

Çак иртнĕ кунсенче йалсоветĕнче йалсовет членĕсемпе участкăсенчи суйлав комиççи членĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта вут-кăвартан сыхланас майпа ийунĕн 25-че каçхине 8 сехетрен пуçласа ирхине 5 сехетчен кашни 10 кил хушшинче пĕрер хуралçă тăратассипе татăклă решени йышăнчĕç. Çак решенине 4-мĕш суйлав участкинчи суйлав комиççийĕ пĕтĕмĕшпех пурнăçлама каткапашыв, пушара сÿнтермели хатĕрсем хатĕрлерĕ.

Ак кĕçех ийунĕн 26-мĕшĕ çитет. Суйлавçăсем ку çурта кĕрсе Ленин—Сталин парти ĕçне вĕçĕмсĕр паранна, çĕршывăн çулăмлă патриочĕсемшĕн хăйсен сасĕсене парĕç.

Арк. Неçтĕрев.

Оперативлă йертсе пыман çĕрĕç пайĕ

Тутаркас районĕ сĕлĕ, урпа тата ытти хăшпĕр кулътурăсем акнепе çураки планне тултарнă. Анчах та çавăнпа пĕрлех чи кирлĕрех кулътурăсене—тулă, вылăх чĕрлĕхсем валли тымар çимĕçсене тата силослăх акакан кулътурăсене планпа пахнă чухлĕ акайман. Ку çеç те мар, агротехникăла чи кирлĕ ĕççене те сахал пурнăçа кĕртнĕ.

Йурытлăшши хулăм пулнă пирки чылай вырăнсенче кĕрхи тырă калчисем пантăхса сайралса йулнă. Çавăнпа та, кĕрхи тырă калчисене лайăхлатас тĕлĕшпе кунта калчасене апат парас ĕç питĕ пысăк вырăнта тăмала пулнă. Çапла пулсан та, кĕрхи тырă калчисене апат парас ĕçе район 37 процент çеç пурнăçа кĕртнĕ.

Колхозсенчи çейăлкăсене тата МТС машинисене шута илсен, район 6 кун хушшинче пĕтĕм çĕр лаптăкне çейăлкăсемпе акса пĕтерме пултарат. Район кăçал суртрисене 10 кун хушши акнă. Çапла пулсан та тĕштырăсем акнă лаптăкран 53 процентне çеç çейăлкăсемпе акса хăварнă.

Агротехникăла ĕççенчен чи нумайрах пурнăçа кĕртни вăл вăрлăхсене йаровизацилени çеç. Районĕнĕ пурĕ 67 процент йаровизацилесĕ акнă. Ытти тĕрлĕ ĕççем çине вара сахал çавăрăнса пăхнă. Сăмахран суртрисене мулчировани тумалли плана 35 процент çеç пурнăçа кĕртнĕ.

Суртри калчисем ÿссех пыраççĕ. Çумкурăксем те вĕсенчен йулмаççĕ. Калайкасси колхозĕн суртри калчисем вакша хура айне пулнă. Йунашар выртакан клевĕр уйĕнче çумкурăксем айĕнче клевĕр калчисем те курăнмаççĕ. Çумкурăксем тĕлĕшпе ăвалтанах „чаплă" йалсем—Шăшкăр таврашĕнчи колхозсем те суртрисем çинчи çумкурăксене çумлама тухман.

Халь çумкурăксемпе чи хĕрсе кĕрешмели вăхăт. Ку тĕлĕшпе Тутаркас районĕн уйрăмăнах вирлĕн кĕрешмеле. Çавăнпа пĕрлех тата суртри калчисене апат парас ĕçе нуçарса йамала. Анчах та суртрисем çинчи çумкăраксемпе кĕрешесси çинчен районра ахаль каласусем çеç илтме пулат. Калчасенĕ апат парасси çинчен асăнни те çук.

Чылай районсем çураки ĕçне вĕçлесе çитернĕ хыççăнах тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе хатĕрленме тытăнчĕç. Çав шутпа витнĕ итемсене тасатса хатĕрлеççĕ, тырă вырмали машинсене йусаççĕ тата ытти ĕçхатĕрĕсене хатĕрлеççĕ. Тутаркас районĕнче çак ĕç тĕлĕшпе те нимĕнле хускану та çук-ха. Районра чылай колхозенче жнейкăсем ванчăк выртаççĕ. Йаракри „Победа" колхозра жнейкă платформăсăр выртат. Карйамалти „Безбожник" колхозра жнейкă çĕнĕ пулсан та тасатман пирки ĕçе йурăхсăр ларат. Чылай çĕрте витнĕ итемсен çивиттисене çил вĕçтерсе кайнă, итĕмсем çинче иртнĕ çулхи улăмсем сапаланса выртаççĕ.

Мĕнрен килет-ха район çавăн пек кайа йулса пыни? Пуринчен ытла кунта, айăп, районри çĕрĕç пайĕ çине ÿкет. Çĕрĕç пайĕ (çĕрĕç пай пуçлăхĕ Кангин йулташ) колхозсене оперативлă йертсе пымамине кашни колозрах курма пулат. Ăна çакă та кăтартса парат. Шомик йалсоветне кĕрекен „Волга" колхоз членĕсем хăйсен колхоз председателне йапăх ĕçлenĕшĕн хĕллехех ĕçрен кăларма ыйтнă. Çав ыйту çине çĕрĕç пайĕ çавăрăнса та пăхман. Вара колхоз членĕсем пухăва пухăнса кивĕ председателе ĕçрен кăларса çĕнĕ председатель суйланă. Çĕрĕç пайĕ çав пуху протоколне çирĕплетмен, кивĕ председателех хăварнă. Вăл вара çураки ĕçнĕ пит йапăх иртернĕ.

Çатракасенчи Ворошилăв йачĕпе таракан колхоз председателĕ йапăх ĕçлесе пынăшăн 1937 çулти октябĕр уйăхĕнче райĕçтăвком президиумĕ ăна ĕçрен кăларса ун вырăнне урăх çын суйласа лартмала тунă. Çавна пурнăçа кĕртме çĕрĕç пайне хушнă. Çĕрĕç пайĕ кăçалхи май уйăхне çитиччченех çав колхоза кайса пăхман, кивĕ председателех ĕçлесе тăнă.

Шупусри „Броневик" колхоз нумай вăхăт хушши председательсĕр пурăнат. Кивĕ председателĕ ĕçрен тухнă, çĕнĕрен суйлани халь те ĕçе тытăнайман. Кунта та çĕрĕç пайĕнчен кайса çав ĕçе йĕркелени пулман.

Çавăн пек ĕçлесе пурăннă халичченех Тутаркас райçĕрĕç пайĕ. Çавăн пек резулътатсем пулнă çавăн хыççăн. Тутаркас райçĕрĕç пайĕ калчасене пăхса ÿстерес ĕçре тата тырпулсене пуçтарса кĕртес ĕçе хатĕрлессинче те оперативлăх йĕнеле сулăнмасăр халичченхи пек ĕçлесе пырсан, вăйлă тырпулшăн йĕтĕрне районĕпе пыракан социалисăмла ăмăртура мала тухасси иккĕлентерет пире.

М. К.

Йалхуçалăх выставкине хатĕрленет

Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕçлĕх илес тесе Малтикасри (Варнар р.) „Пĕрлешÿ" колхоз иртнĕ çулта вăйлă тырпулшăн вăйлăн кĕрешсе, пысăк çитĕнÿсем турĕ. Колхоз вăтам шутпа кашни гектартан 130 пăт тĕштырă туса илчĕ.

„Пĕрлешÿ" колхоза Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкин комитечĕ выставкăра пулма çирĕплетни çинчен пĕлтерсен, панă тивĕçе алран йарас мар тесе, 1938 çулхи вăйлă тырпулшăн колхозра татах хастарлă кĕрешÿ пуçланче. Колхоз хăй çине татăклă обйазательствă илсе, Çĕнйалти „Правда" колхозпа ăмăртăва тухрĕ. Бригадăпа бригадă, звенопа звено, колхозникпа колхозник хушшинче социалисăмла ăмăрту анлăн сарăлса пычĕ.

— Иртнĕ çулта епĕр ĕçкунĕ пуçне 8-шер килограм тырă валеçнĕ пулсан, кăçал лайăхрах ĕçлесе пырса, гектартан 150 пăтран кайа мар тырă илсе, ĕçкунĕ пуçне 10 килограм валеçмеле тăватпăр,— теççĕ „Пĕрлешÿ" колхозăн колхозникĕсем.

Йеремйĕв çемйи иртнĕ çулта 864 ĕçкунĕ туса 432 пăт тĕштырă илнĕ. Тăлăх пурăнакан Васильĕвă Анисйă 240 ĕçкунĕ туса 120 пăт тĕштырă илнĕ. Çамрăк хĕрсем Константинăвă, Матвейĕвă стахановкăсем 200-шер ĕçкунĕ ытла туса 100-шер пăт тырă илнĕ. Кăçал татах савăнăçлăн та хаваслăн ĕçлеççĕ вĕсем.

Халĕ колхозра кашни гектартан 150 пăт тырă туса илессишĕн, выставкăра малти рете тухассишĕн кĕрешеççĕ. Ку ĕçре кăçал та пысăк çитĕнÿсем туса иртерне. 171 гектар лаптăк çине кĕске срукра лайăх пахалăхпа акса хăварнă. Кĕрхи тырра 100 процентчĕпех апат панă.

Колхоз халĕхи вăхăтра акнă тырпула лайăх пăхса ÿстерсе, вĕсене кĕске вăхăтра пĕр тăкаксăр пухса кĕме хатĕрленет. Ку тĕлĕшпе халĕ машинăсене йусама тытăннă. Урапа, лапа таврашĕсене йусаса çитернĕ. Шăналăк-михĕсене хатĕрлесе тасатса хунă. Ĕç вăхăтĕнче пĕрлешÿлĕ столовăй пулат.

Выставкăна кайма експонатсене инструкцире кăтартнă пек хатĕрлесе çитернĕ. Хатĕрленĕ експонатсене тирпейлĕ пăхса усраççĕ.

Йев. Воробйов.

Атăл çинче

Мохăв фото-укерчĕкĕ.

Генлейн Чехословакине таткаласа ваклама ыйтма халĕ те чарăнмаст

ПРАГĂ, июнĕн 9-мĕш. (ТАСС) Гитлерăн Чехословакири агентури—Генлейн партийĕ Чехословаки правительствине зайавлени йанă, унта Судет облăçĕнчи лару-тăрăва йĕркене кĕртес тĕлĕшпе правительствăпа каласма килĕшни çинчен кăтартса çырнă, анчах та çав каласусене Генлейн хăй малтан тăратнă условисем тăрăх кăна тумала. Генлейнăн кун умĕн кăларса тăратнă требăвănисем çакăн пек: Судет облăçне автономи парасси, çав облăçри чех служăщисем вырăнне—нимĕççене лартасси пулат тата ыт. те. Çав требăванисене пурнăçа кĕртни Чехословаки умне ăна таткаласа ваклас хăрушлăх тухса тăнă пулĕччĕ.

Чехословаки правительстви Генлейн зайавленине хирĕç ответ паман-ха. Англи дипломатийĕ Чехословаки правительствине хĕсме чарăнмаст-ха! вăл генлейнăвĕçсене тата Чехословакири фашисла ытти партисене уступкăсем тутарасшăн тăрăшат.

(ТАСС).

Чехословакире фашисăма хирĕçле йухăм ÿсет

ПРАГĂ, июнĕн 9-мĕш. (ТАСС). Фашисăма хирĕçле йухăм пĕтĕм Чехословаки тăрăх кунсерен ÿссе пырат. Демонстрацисем тата фашисăма хирĕç кĕрешекен партисем пĕрле выступленисем туни çинчен пĕлтерекен хыпарсем Чехословакин пур кĕтесĕсенчен те пыраççĕ.

Глубоцкы хулинче (Судет-Нимĕç облăçĕ) нимĕç çамрăкĕсен фашисăма хирĕç кĕрешекен мĕн пур союзĕсен членĕсем те демонстрацие туса иртерне. Демонстрацире пулнисем Чехословаки никăма пăхăнмасăр пурнассишĕн кĕрешесси çинчен калакан (Германи фашисăмăн агрессине тата унăн генлейнла агентурне хирĕç) лозунгсемпе кăшкăрнă. Муниципали ет суйлавĕсен (вырăнти тытăм органĕсен суйлавĕсем) виççĕмĕш турне хатĕрленнĕ май Çурçĕр Чехинче чылай вырăнсенче суйлав умĕнхи пĕрлехи пухусемпе митингсем пулса иртнĕ, вĕсене коммунисла парти тата чех социал-демократĕсем организациленĕ.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Леванта патĕнчи фронтра республиканĕçсем, тăшман çине кĕтмен хушăран тылран пырса тапăнса, Винъаормосрен çурçĕр-хĕвелтухăç йенче пăлхавçăсем йышăннă електростанцине çĕмĕрсе, ăна стройран кăларнă. Хăйсене хушнă ĕççене пурнăçа кĕртнĕ хыççăн, республиканĕçсем хăйсен позицисене пĕр çухатусăрах таврăннă.

Центрти фронтăн Ĕстремадурă участкинче республиканĕçсем хăйсен ĕçĕсене лайăхлатнă.

Франци чиккинчен 25 километрта (Херон провинци) фашиссен 9 самолъочĕ июнĕн 8-мĕшĕнче Фигерас йатлă хула çине бомбăсем пăрахнă. 23 çурта ишĕлтерсе антарнă, вăл шутра пульница, шкул тата ватă çынсем тарса пытанмали çурт та пур. Мирлĕ пурăнакан халăхсем хушшинче 40 çынна йахăн вилнĕ тата 60 çын аманнă.

(ТАСС).

Ачасем арифметикăна начар пĕлеççĕ

Тавăшкасенчи (Çĕрпÿ р.) туллимар вăтам шкулти пĕррĕмĕш клас 1937—38 вĕренÿ çулĕнче лайăх резулътат пачĕ. Вĕренекенсене пурне те иккĕмĕш класа куçарнă. 27 ачаран тăван чĕлхепе 5 ача „отличнă", 12 — „хорошо"; 10 — „посредственно" вĕреннĕ. Ку класра вĕренекенсем шутлама, çырма та аван вĕренсе çитнĕ. Иккĕмĕш виççĕмĕш классенче вĕрентнĕ учительсем ачасене çителĕклĕ пĕлÿ парассипе тăрăшса ĕçлемен. Иккĕмĕш класра (учительницă Йемелйанăвă) пĕр ача, виççĕмĕш класра ик ача малали классене куçаймарĕç.

IV, V, VI тата VII-мĕш классенче те вĕренÿ ĕçĕ çителĕклĕ пулнă теме çук. Халĕ IV, V тата VI-мĕш классенче пĕлÿ тĕрĕслевне пур предметсемпе те туса иртернĕ. Асăннă классенче вĕренекенсем пĕлÿ тĕрĕслевне начар хатĕрленнĕ. Акă, арифметикăн çырулă ĕçĕнче V-мĕш класра вĕренекенсенчен 1 ача „очень плохо", 4 — „плохо" отметкăсем илчĕç. V-мĕш класран VI-мĕш класа куçас вăхăт çитнĕ тĕле те хăшпĕр ачасем хутлав таблицине вĕренсе çитмен. V „А" класра та ĕçсем йапăх. Ку класра июнĕн 1-мĕшĕнче арифметикăпа çыру ĕçĕ пулчĕ. Çыру ĕçĕнче 8 ача „плохо" отметкăсем илнĕ.

Июнĕн 1-мĕшĕнче VI „А" класра пĕлÿ тĕрĕслевĕ географипе пулчĕ. Ачасем билетсенчи ыйтусене начар ответлеççĕ, хуласене кăтартакан картă çинчи точкăсене тупаймаççĕ.

V-мĕш класра вĕренекен 38 ачаран географипе 6 ача „плохо" отметкăсем илнĕ, „Отлично" отметкă илни пачах та çук. Ку, паллах, географипе вĕрентекен учитель малтанхи вăхăтра уроксене начар, хатĕрленмесĕр иртернинчен те нумай килет. Нимĕç чĕлхипе ачасем лайăхрах пĕлеççĕ. Ку предметпа „плохо" отметкă илекенсем пулмарĕç.

Вырăс чĕлхипе вĕренес ĕç пур классенче те начартарах тăнă. Учительсем ачасене вырăс чĕлхипе çырнă литературăсене вулама хăнăхтарассипе сахал интересленнĕ.

1937—38 вĕренÿ çулĕнче чылай предметсемпе учебниксем çителĕклех пулаймарĕç. Учебниксем çителĕксĕрри вĕренÿре чылай чăрмав кÿчĕ. Учебниксем пирки ĕç урăх шкулсенче те начар тăрат. Çавна шута илсе, ЧАССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн вĕренÿре кирлĕ учебниксене çитес вĕренÿ çулĕ валли вăхăтра пичетлесе кăлармала.

Г. ШУМИЛĂВ.

Учительсен çуртне аслатаççĕ

Шупашкар хула совечĕ Шупашкарти учительсен çуртне (Ленин урамĕ) аслатма йышăннă. Учительсен çурчĕ ку таранччен пĕр хутлă çеç пулнă, тавăр пирки хулари учительсен йышлă массине кулътурă тĕлĕшĕнчен çителĕклĕ пулăшу параймаи.

Халь учительсен çурчĕ çине иккĕмĕш хутлăх хăпартаççĕ. Айалта зал, фойе пулаççĕ, саслă киноустановкă лартаççĕ. Иккĕмĕш хутлăхĕнче читалънă, çитĕннисемпе ача-пăча библиотекисем организацилеççĕ.

Иккĕмĕш хутлăха çĕнĕ вĕренÿ çулĕ пуçланнă тĕле — çентябĕрĕн 1-мĕшне туса пĕтереççĕ.

„Папанинцы" филъм Канашри савăтра

КАНАШ. Июнĕн 6-мĕшĕнче Канашри вакунсем йусакан савăтра пысăк та илемлĕ, документлă филъм „Папанинцы" кăтартрĕç. Кино курма пынă халăх Совет Союзĕн Геройĕсем — Папанин, Кренкĕл, Ширшов, Федăрăв никам пырса кĕмен Çурçĕр полюсне кайса тăхăр уйăх ытла аслалăхлă ĕç тунине, Арктикăн сивĕ те хайар çанталăкĕпе кĕрешнине, хăйсене валли йуртан пÿртсем тунине тата ыттине те курсан хаваслanса питĕ хытă ала çупрĕç. Д. Иванов.

Библиографи

Н. И. Йежов йулташ сăмахĕ*)

Н. И. Йежов йулташăн Горький хулинче, Горький-Ленинский суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче 1937 çулхи декабĕрĕн 9-мĕш кунĕнче каланă сăмахне чăвашла куçарса уйрăм кĕнеке туса кăларнă. Çак кĕнеке, хăй пĕчĕккĕ пулин те, Шухăшсемпе пуйан, пит те кирлĕ кĕнеке. Йежов йулташ унта Совет Союзĕ 20 çул хушшинче мĕнле пысăк ĕççем туни çинчен кĕскен, анчах пит те ăнланмала каласа парат. Вăл хамăр тунă ĕççен итогĕсем çинчен калат.

Пирĕн çĕршывра капиталисăмлă хутшăнусене ĕмĕрлĕхех пĕтернĕ. Капиталисăмлă уйрăм харпăрлăх çук. Çынна çын експлоатацилес йĕркене йăлтах пĕтернĕ. Вĕсем патне таврăнма çул çук, никăçан та пулас çук.

Пирĕн çĕршыв ĕлĕк çурмаколони пулнă, кулътурă тĕлĕшпе кайра тăнă, чухăн пулнă. Халĕ вăл пур тĕлĕшпе те малта пыракан çĕршыв пулса тăчĕ. Пирĕн промышленнăç вăйлă. Пирĕн пĕр Магнитогорский савăт кăна 1936 çулта Полъшăри мĕн пур металурги савăчĕсенчен икĕ хут çурă ытларах чукун шăратса кăларнă. Пирĕн Магнитогорский тата Кузнецкий савăтсем 1936 çулта Йапонири мĕн пур савăтсенчен вăтăр процент ытларах чукун шăратса кăларнă. Çак икĕ пример пирĕн çĕршыв промышленнăç тĕлĕшпе мĕнле паттăр пулни çинчен пит те аван каласа парат.

Пирĕн йалхуçалăхĕ—коллективлă хуçалăх. Пĕтĕм çĕршыв ÿсĕмĕ тĕлĕшĕнчен йалхуçалăхне коллективизацилени татах та пысăк çĕнтерÿ пулса тăрат. Пирĕн хресченсене вак хуçалăх патне никам та кайала таврăнма пултарайас çук.

Пирĕн çĕршывра безработицăна ĕмĕрлĕхех пĕтернĕ. Йут çĕршывсенчи рабочисем ССР Союзĕнчи рабочи класăн пурнăçĕ пек пурнăç çинчен халĕхе ĕмĕтленме çеç пултараççĕ.

Пирĕн çĕршыв кулътурлансах пырат. Пурне те обйазательнă хутла вĕрентни, тÿлевсĕр вĕренмели правă — калама çук пысăк çитĕнÿ.

Пирĕн çĕршыв—нумай нацилĕ çĕршыв. Ĕлĕкхи вăхăтра патша Российĕ халăхсен тĕрми пулнă. Халĕ ССР Союзĕнчи нацисем туслă пурăнаççĕ. Пĕр ĕçшĕн, пĕр тĕллевшĕн кĕрешеççĕ. Вăл—комунисăм тăвасси. Çак кĕрешсе илнĕ çитĕнĕве пирĕнтен никам та кайала туртса илеймĕ.

Пирĕн хĕрарăмсемпе арçынсем пĕр тан. Вĕсен прависем пĕр пекех. Пирĕн çĕршыври хĕрарăмсен пĕртанлăх правине никам пирĕнтен кайала туртса илме пултараймĕ.

Çакăн пек вĕсем — Йежов йулташ хăйĕн сăмахĕнче каласа панă итогсем. Çаксем вара пурнăçра пур йапаласем, кĕрешсе илнĕ итогсем. Вĕсене Сталинла Конституцире ылттăн саспаллисемпе çырса хунă. Çак кĕрешсе илнĕ итогсене пирĕнтен туртса илме никам та вăй çитереймĕ.

Фашисăмăн йунлă агенчĕсем—троцкиссем, бухаринла-рыкăвла сволăчсем, буржуалă националиссем пирĕн çав çитĕнÿсене пĕтерсе лартса, капиталисăма кайала таврасшăн пулчĕç. Совет халăхĕ çав ирсĕр бандитсене хайаррăн пĕтерсе тăкрĕ, малашне те вĕсене ним хĕрхенмесĕр пĕтерсе пырĕ.

„Халĕ те, йулташсем, кĕрешÿ пĕтмен-ха. Пирĕн çул çинче сахал мар йăвăрлăхсем тĕл пулĕç. Çакна манма йурамаст: пирĕн çĕршыв тавра тăшмансем, капиталиссем хупăрласа тăраççĕ."

* * *

Агитатăрсемшĕн, каласу иртерекенсемшĕн, докладчиксемшĕн Н. И. Йежов йулташ сăмахĕ пит те лайăх, ăнланмала материал. Вăл кĕнеке РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Советне суйлас йĕрке çинчен докладсем тунă чухне те усăлă кĕнеке пулса тăрат. Çак кĕнекене пурин те туйанса вуламала.

Мусс.

*) Н. И. Йежов йулташ сăмахĕ. Чăвашгосиздат. 1938 ç., 20 стр. Хакĕ 20 кус.

Тăван чĕлхепе пĕлÿ тĕрĕслевĕ

Кÿкеçри (Шупашкар р.) вăтам шкулта V, VI тата VII-мĕш класенче тăван чĕлхепе пĕлÿ тĕрĕслевĕсем пулса иртрĕç. Çыру ĕçĕнче V „А" класра 7 ача „отлично", 14—„хорошо", 11—„посредственно", 1—„плохо" отметкăсем илчĕç. Ачасем билетсем çинче çырнă ыйтусене тĕрĕс ответлеççĕ. Иквиç ача билетсем çинчи ыйтусене ответличчен, ытти ачасем ответлеме хатĕрленсе лараççĕ, хăшпĕр ответсене çырса хураççĕ. Отличниксем пĕр такăнмасăр ответлеççĕ. Учительпе ассистент савăнса кăна лараççĕ. Ачи те, ответлесе пĕтерсен, савăнăçлă чĕрине лăплантарса, хăй вырăнне кайса ларат. V „А" клас дисциплинă йенчен те, вĕренÿ пахалăхĕ йенчен те малти вырăнта тăрат.

V „Б" класра та тăван чĕлхепе „отлично", „хорошо" отметкă илекенсем чылайах пулчĕç. Анчах кунта сăмахпа начар каланисен йышĕ пысăк, 6 ача. Ку класра шкула кун сиктерсе çÿрекенсем те чылайах пулнă, вĕренÿре начар ĕлкĕрсе пынă ачасем те пур.

VI „А" класра çыру ĕçĕнче 22 ачаран 1 ача „отлично", 3—„хорошо", 10—„посредственно", 8—„плохо" отметкăсем илнĕ. Ку класра тăван чĕлхепе пĕлÿ тĕрĕслевĕ начар иртрĕ. Пуринчен ытла пуплевсем туса çырма пĕлменни палăрат, тăван чĕлхепе малтан вĕренни çителĕксĕр пирки, хăшпĕр темăна питех те йăвăррăн ăнланса илеççĕ.

VII мĕш класра вĕренекен ачасем пĕлÿ тĕрĕслевĕнче сăмахпа лайăх каласа пачĕç пулсан, çыру ĕçĕпе питех те начар вара. 40 ачаран 8 ача „плохо" отметкă илнĕ. Ачасем çемçе сăмахсенче ť, љ, ң, çырни, икĕ пĕр пек хупă саспаллине йунашар çырма пĕлменни, хытă сăмахсенче ç, ť, ч хыççăн и çырни, каймала пек сăмахсенче икĕ л çырни, хÿрелĕ пăнчăсем лартма пĕлменнисем палăраççĕ.

Тăван чĕлхепе вĕрентес ĕç пĕр Кÿкеçри вăтам шкулта çеç мар, ытти шкулсенче те начар-ха. Ку ĕçре Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ те айăплă. 4—5 çул хушши ĕнтĕ шкулсем тăван чĕлхепе вĕрентме программă çуккипе аптăраççĕ. Хальхи вăхăтра тăван чĕлхепе вĕрентме программă, учебниксем çук пирки, кам мĕнле вĕрентес тет, çавăн пек вĕрентет. Акă, пĕр учительницă класнăй журнал çине çапла çырса хунă: „2/IX. Вырăсларан чăвашла куçарасси. 29/IX. Приставкăсене куçарасси. 1/X. Виçĕ предложени куçарасси..." Çапла, чăваш чĕлхинчи тата вырăс чĕлхинчи формăсемпе сыхăнтармасăр, шкулта куçару ĕçĕпе аппаланса ларни мĕнле усă парĕ-ши ачасене?—Вăл чĕлхене вĕренни мар—вăхăта иртерни кăна.

Тăван чĕлхе ĕçхалăх ачи-пăчине политикă тата кулътурă тĕлĕшĕпе пăхса ÿстерес ĕçре шкул пурнăçĕнче çивĕч хĕçпăшал пулмала, ачасен дисциплинине çирĕплетес, вĕренÿ пахалăхне хăпартас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăмала. Анчах чылай шкулсенче кусене пурнăçа начар кĕртсе пыраççĕ-ха.

Тăван чĕлхене иртнĕ вĕренÿ çулĕнче ачасем лайăх вĕренни—1938—39 вĕренÿ çулĕнче вĕренмели материала лайăх вĕрентме пулăшат. Фонетикăпа морфологийе çителĕксĕр ăнланса илнĕ пулсан, синтаксиса вĕренме питех те йăвăр. Вара ачасем кăштах йăвăртарах темă тĕл пулсан, ăнланса илеймеççĕ, шухăшсене сапалантарса йарса, уроксене итлемесĕр лараççĕ.

V-мĕш классенче тăван чĕлхепе ернере 5 сехет вĕрентни çителĕклĕ пулсан, VI-мĕшпе VII-мĕш класене 2-шер сехет питех те сахал вара.

Чĕлхене пĕр теори тĕлĕшĕпе çеç вĕренни вăл пачах çителĕксĕр. Ăна практикăпа сыхăнтарса пурнăçра усă курма пĕлмеле. Çавăнпа та теорине çирĕплетме кашни темăпа хăнăхтарусем (тĕрлĕ йышши çыру ĕçĕсем: пăхса çырасси, диктант, сочинени) туса иртерни кирлĕ. Чĕлхенех практикăлă ĕçсемпе сыхăнтарса, тĕпчесе, тишкĕрсе вĕрентсен, вăл ачасен пĕлĕвне ÿстерме чылай пулăшат. Çаксене çитес вĕренÿ çулĕнче тăван чĕлхепе ĕçлекен учительсен асра тытмала.

Й. Романăвă.

Ответлă редактăр заместителĕ
И. П. ПАВЛĂВ—ПИНЕР

Пайан кино-театрта	Çĕнĕ, саслă кино-филъм „Год 19-ый"

Атăлăн сулахай йенче Шупашкар хули тĕлĕнче Сивчир станцийĕ шывлă-лачакалă шурлăхлă вырăнсене (сивчир сарма пултаракан вăрăмтунасене (кăмарисене) пĕтерес шутпа) парижскайа зелень емелпе сирпĕтсе тухат. Вăл вырăнсенчи шывран сирпĕтнĕ хыççăн

3 КУН ХУШШИ

вылăхсене шăварма йурамаст

Затон, Аракка тата Травйанка шывĕсене емелпе сирпĕтмеççĕ.

Хăш кун сирпĕтессипе уйрăм пĕлтерÿсем çапса пĕлтереççĕ (перевоз пристанĕ çинче, Милютинри хăма савăтĕнче тата Голодйанкăра).

Хăш кун тата мĕнле вырăнсене емелпе сирпĕтесси çинчен Милютинри Сивчир пунктинче ыйтса пĕлме пулат.

Сивчир станци.

2—1

ЧĂВАШСЕН ГОСУДАРСТВĂ ФИЛАРМОНИЙĔ

Чăвашсен Государствă Академи Театрĕнче Украинăн музыкăлă драмипе комедийĕсен

Йулашки спектаклъсем

Июнĕн 11-мĕшĕнче

Автăрĕ Карпенко-Карый

„БЕЗТАЛАННАЯ"

4-пайлă музыкăлă драмă

Июнĕн 12-мĕшĕнче

каçхи спектаклъ

„ПРОДАННАЯ ДОЧЬ"

4 пайлă музыкăлă комеди

Июнĕн 12-мĕшĕнче

ачасене валли кăнтăрлахи спектаклъ

„Сорочинская ярмарка"

3 пайлă музыкăлă комеди

Каçхи спектаклъсем каçхине 9 сехетре, кăнтăрлахисем 1 сехетре пуçланаççĕ.

Кăнтăрлахи спектакле кĕме билет хакĕсене 50 процент йÿнетнĕ.

АДМИНИСТРАЦИ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 289

13

Гор. Чебоксары, Типографии № 1 Чувашполиграфтрест, Заказ № 500.